ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул
Январь
12
ШĂМАТКУН
№ 9 (8661)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Тăван çĕршыва йывăç ытларах хатĕрлесе парар! (1 стр.).
Халăх демократи çĕршывĕсенче (1 стр.).
Р. Архипов.—Обществăллă хуçалăха аталантармалли майсемпе туллин усă курмалла (2 стр.).
О. Михайлова.—Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатма мĕн чăрмантарать (2 стр.).
С. Аслан.—Çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатмалла (2 стр.).
Ачасене—çирĕп пĕлӳ. Шупашкар хулинчи учительсен канашлăвĕнчен (3 стр.).
Т. Ероплан.—Социализмлă ăмăртăва ертсе пырассине лайăхлатмалла. «Комбайндеталь» заводри профсоюз членĕсен пухăвĕнчен (3 стр.).
ТЕАТР. **К. Иванов.**—«Ялта» драма сцена çинче (3 стр.).
ХАМĂР РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ. **Н. Минин.**—Самолет чирлĕ çын патне вĕçрĕ; **Н. Орлов.**—Корреспондентсен районти канашлăвĕ (3 стр.).
ООН Генеральнăй Ассамблейин ултăмĕш сессийĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Коммунистсен авангардлă рольне куллен ӳстермелле

Ленин—Сталин партийĕ—совет халăхĕн çулпуçĕ, организаторĕ тата хавхалантаракан̆ĕ пулса тăрать. Коммунистсен партийĕ ертсе тата çул кăтартса пынипе совет халăхĕ хăйĕн чи аслă ĕмĕтне пурнăçлать, коммунизм тăвать.

Эпир, коммунистсем,—тенĕ Сталин юлташ Ленин вилнĕ хыççăн тупа туса каланă сăмахра,—уйрăм йышши çынсем. Эпир уйрăм йышши материалран тунăскерсем. Эпир—аслă пролетариалĕ стратегăн çарĕ, Ленин юлташăн çарĕ пулса тăратпăр. Çав çарта тăрассинчен хисеплĕ урăх нимĕн те çук. Ленин туса, ертсе пынă партин членĕ ятĕнчен çӳлли урăх нимĕн те çук.

Ленин—Сталин партийĕн ретĕнче тăни кашни коммунист çине калама çук пысăк ответлăх хурать. Парти членĕн тивĕçĕсем те çав тери пысăк ВКП(б) уставĕ кашни коммуниста парти дисциплинине çирĕп тытса пыма, партипе çĕршывăн политикăллă пурнăçне активлă хутшăнма, ĕçре парти политикине тата парти органĕсен решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пыма хушать. Кашни коммунистăн ĕç дисциплинине тата государство дисциплинине тытса пырас тĕлĕшпе ытттисемшĕн кăтартуллă пулмалла, хăйĕн производствăри тата ĕçри квалификацине тăтăш ӳстерсе пырса, ĕçĕн техникине лайăх пĕлмелле.

Парти Уставĕ хушнисене çирĕп пурнăçласа пырасси, политикăллă пĕлӳпе культурăлăха ӳстерессi, ялан массăсен малти ретĕнче тăрса, вĕсене кĕрешӳре хавхалантарса пырасси парти членĕн тивĕçĕ пулса тăрать. Коммунизм строительствин пур участокĕсенче те коммунистăн хăйне шанса панă ĕçе никамран та лайăхрах туса пымалла.

Халăх хуçалăхĕн кирек хăш отраслĕне илсен те эпир çакна куратпăр: пур çĕрте те Ленин—Сталин партийĕн членĕсемпе кандидачĕсем хăйсен пархатарлă ĕçĕпе, большевикла тĕрĕс те витĕмлĕ сăмахĕсемпе совет çыннисене хуçалăхпа культура строительствинчи задачăсене чыслă пурнăçлассишĕн, коммунизм строительствинчи сталинла аслă плансене тултарассишĕн кĕрешме хавхалантарса пыраççĕ. Парти ертсе пыни, коммунистсем парти политикине пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлени пирĕн çĕнтерӳсен пĕртен-пĕр хăватлă çăлкуçĕ пулса тăрать.

ВКП(б) Чăваш обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ, партин Центральнăй Комитечĕ пирĕн республика умне кăларса тăратнă задачăсене хăвăртрах пурнăçламалла тăвас тесе, пысăк ĕçсем тума палăртрĕ Обком пленумĕ палăртнă ĕçсем хушшинче промышленноçпа ялхуçалăхне тата культура строительствине малалла аталантарас, çавна май ĕççыннисен йăлапа пурнăç условийĕсене куллен лайăхлатас тата рабочисемпе колхозниксен культурине ӳстерес ыйтусем тĕп вырăнта тăраççĕ. Пленум палăртнă ĕçсем республикăри кашни коммунистăн ответлăхне темиçе хут ытларах ӳстереççĕ тата парти членĕсемпе кандидачĕсен организаторла рольне вăйлатма хушаççĕ. Партипе правительство заданийĕсене пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлесси, рабочисемпе колхозниксен политикăллă тата производствăллă активлăхне пуçарса пырасси кашни коммунистăн чыслăрах та чыслă тивĕçĕ пулса тăраççĕ.

Республикăри предприятисенче колхозсемпе машина-трактор станцийĕсенче ĕçлекен коммунистсенчен нумайăшĕ производствăра малта пыраççĕ, вĕсем хăйсене шанса панă ĕçе лайăх та вăхăтра тăваççĕ. Стахановецсем тата производство новаторĕсем пулса, коммунистсем хуçалăхăн шалти резервĕсемпе, оборудованипе туллин усă курма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма тата унăн хăйне ларакан хакне йӳнетме, материалпа чĕртавара перекетлеме çĕнĕ майсем тупаççĕ. Колхоз производствинче ĕçлекен коммунистсем çĕрĕçпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç культурине хăпартас, тырпул тухăçлăхĕпе фермăсенчен илекен тупăша ӳстерес тĕлĕшпе пысăк ӳсĕмсем тăваççĕ. Анчах пĕр коммунист та харпăр хăй çитĕнĕвĕпе кăна лăпланса ларма пултараймасть. Унăн массăсен организаторĕ пулмалла. Çакă вăл акă мĕне пĕлтерет: кашни коммунист хăй кăна мар, хăйпе пĕрле ĕçлекен кашни рабочие е колхозника техникăна тата наука кăтартăвĕсене вĕрентме тăрăшмалла, вĕсене пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме хавхалантарса пымалла.

Коммунистсем производствăри харпăр хăйĕн ĕçĕшĕн кăна мар, бригада е цех, колхоз е предприяти ĕçĕшĕн те ответлă пулса тăраççĕ. Предприятипе колхозра мĕн лайăххи е çĕнни пур, çавсене пурне те массăсем хушшинче сарса пымалла. Хуçалăхра çитменлĕхсемпе йăнăшсем палăраççĕ пулсан, пĕр коммунист та, кунанăн ĕç мар-ха тесе, айккинче тăма пултараймасть. Пирĕн çитменлĕхсем, пуринчен ытла, эпир ĕçе тĕрĕс организацилеме пĕлменнинчен килеççĕ. Çĕмĕрле МТС-сенчи парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕнче çакă палăрчĕ: кунти коммунистсем малта пыраканисен опытне сарса пымаççĕ. Çитменнине тата, хуçалăхра пысăк йĕркесĕрлĕхсем пур пулин те, вĕсемпе килĕшсе пурăнма хăнăхнă. Çакă вăл парторганизацин шалти пурнăçĕ вăйсăр пулнинчен, парти членĕсемпе кандидачĕсен производствăри организаторла пултарулăхне ӳстерме кирлĕ пек тăрăшманнинчен килет.

Коммунистсен производствăри авангардлă рольне куллен ӳстересси парторганизацисен ĕçĕнче кирек хăçан та тĕп вырăнта пулмалла. Предприяти е колхоз умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлас ĕçре кашни коммунистăн пултарулăхĕпе пуçарулăхне вăйлатасси—парторганизацисен тивĕçĕ. Апла пулсан парти членĕсемпе кандидачĕсене воспитани парас тата парторганизацисен шалти ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе нимрен ытларах тăрăшни кирлĕ. Партиллĕ-политикăллă ĕçĕн пур майĕсемпе те усă курса, коммунистсене шейăлăх тĕлĕшĕнчен çирĕп пулма, ĕçре пуçарулăх ытларах палăртма, хушнă ĕçшĕн парти умĕнче ответлăха çирĕп туйса тăма воспитани памалла. Партин кашни членĕ е кандидачĕ хăй ĕçлекен участокра рабочисене, колхозниксене тата ытти ĕççыннисене парти политикине, партипе правительство решенийĕсене ăнлантарса памалла, парти лозунгĕсемпе решенийĕсене пурнăçлас ĕçре хăйĕн хастарлăхне вĕçĕхĕррисĕр палăртса, массăсене паха тĕслĕх кăтартма тивĕç.

Парторганизацисен опытĕнчен эпир çакна куратпăр: пуçламăш парторганизацин шалти ĕçĕ идея тĕлĕшĕнчен вăйлă чухне коммунистсем производствăра та малта пыраççĕ, обществăлла-политикăллă ĕçре те хăйсен активлăхне анлă палăртаççĕ, государство интересĕсене çирĕп сыхласа тăраççĕ. Çакна темиçе çĕршер тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пама пулать. Шупашкарти Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри парторганизацие илĕпĕр-и е Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри парторганизацие илĕпĕр-и,—вĕсенче коммунистсен организаторла ролĕ тĕкĕр çинчи пек уççăн курăнать. Асăннă заводпа колхоз государство заданийĕсене кирек хăçан та пуриничен малтан тата срокчен тултарни пĕтĕмпех коммунистсем ĕçе тĕрĕс йĕркеленинчен килет. Кунти парторганизацисем коммунистсене производствăри ответлă участоксене тĕрĕс вырнаçтарса тухнă, вĕсен производствăлла тата политикăлла вĕренĕвне лайăх йĕркеленĕ. Парти пухăвĕсенче, рабочисен е колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче, производствăллă канашлусенче коммунистсем производство ыйтăвĕсене татса парас ĕç çине парти хушнă пек пăхаççĕ, ĕçе парти вĕрентнĕ пек тума хăнăхаççĕ. Çавăнпа та вĕсем массăсен социализмлă ăмăртăвне, стахановла ĕçне организацилесе тата пуçарса пыраççĕ.

Паллах коммунистсене производствăра малта пымалли çинчен асăрхаттарни кăна çителĕксĕр. Парторганизацисен парти членĕсемпе кандидачĕсене тимлĕ пулăшса пырас пулать. Коммунистăн шухăш-кăмăлне, унăн пултарулăхĕпе пĕлĕвне лайăх пĕлни парторганизаци руководителĕсене партин кашни членне вăхăтра пулăшу пама, ăна йăнăшсем тăвасран вăхăтра астутарма май туса парать.

Республикăри коммунистсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ—ВКП(б) Чăваш обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçлассишĕн большевикла кĕрешмелле. Çак кĕрешӳре массăсен малти ретĕнче тăрса, вĕсене хавхалантарса пырасси парти членĕсен паянхи пархатарлă тивĕçĕ.

Ленин кунĕсене хатĕрленеççĕ

ХУСАН. Хусанти В. И. Ульянов (Ленин) ячĕпе тăракан государство университетĕнче Ленин кунĕсене паллă тума хатĕрленеççĕ.

Владимир Ильич вĕреннĕ университетри студентсем тата профессорсемпе преподавательсем Ленин кунĕсене вĕренӳри, çавăн пекех наука ĕçĕнчи çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ. Университетра халĕ экзаменсем пыраççĕ. Экзамен панă студентсенчен 92 проценчĕ лайăх тата питĕ лайăх паллăсем илнĕ.

Университетри научнăй работниксем нумайăшĕ Ленин кунĕсенче Хусан хулинчи предприятисенче, шкулсемпе учрежденисенче докладсем туса параççĕ. В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ тĕле университет библиотеки пысăк выставка хатĕрлет.

Юридически факультет студенчĕ пулнă Владимир Ульянов 1887 çулта лекцисем итленĕ аудиторире пĕрмаях дежурнăйсем тăраççĕ. Аудиторие хулари нумай çынсем пырса кураççĕ. (ТАСС).

Совет Союзĕ тăрăх

Аслă стройка штабĕнче

ЗАПОРОЖЬЕ, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Кăнтăр Украинăпа Çурçĕр Крым каналĕсен строительствин тĕп управленийĕнче строительствăпа монтаж управленийĕсен начальникĕсемпе главнăй инженерĕсен канашлăвĕ пулнă.

Канашлура иртнĕ çулхи ĕçсем çинчен тата 1952 çулхи задачăсем çинчен «Укрводстрой» главнăй инженерĕ В. Н. Симаков юлташ доклад тунă.

Докладчик строительсен коллективĕ 1951 çулта государство заданине пурнăçланине палăртнă. Часах Симферополь водохранилищине тата Каменный под. Анатри Ингулец тата Тури Ингулец уй-хире шăвармалли системăсене тума тытăнаççĕ. Днепр тата Молочная юханшывĕсем хушшинче те ĕç сарăлса каять. Кунта Кăнтăр Украина каналĕн тăпра нумай чавса кăлармалли вырăнĕнче çĕр чавма пуçлаççĕ.

Кăçал тумалли ĕçсене пурнăçлама Симферопольре, Дарьевка, Ново-Горевка, Каменка ялĕсенче тата Сиваш районĕнче çĕнĕрен строительствăпа монтаж управленийĕсем тăваççĕ.

Машинăсене питĕ лайăх юсаççĕ

МАРДАКЕРТ (Азербайджан ССР-ĕ), январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Мардакертски МТС мастерскойĕнчен сезонри планран иртгерсе 5-мĕш трактор юсаса кăларнă. МТС-ăн мĕнпур комбайнĕсем, молотилкисем, сеялкисем тата ытти ялхуçалăх инвентарĕ юсавлă, вĕсемпе паян тесен паян ĕçе тухма пулать. Машинăсемпе инвентаре трактор бригадисене паспорт тăрăх панă. Трактористсемпе комбайнерсем техникăпа лайăх усă курма обязательство илнĕ.

Мардакертски МТС-ри механизаторсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме хăнăхса çитнĕ. Вĕсем, хăйсем патĕнче хăнара пулнă Бакури паллă нефтяник Ага Гусейн Кафаровран вĕренсе, машинăсене пĕрре юсанă хыççăн тепре юсиччен нумайрах вăхăт ĕçлемелле тунă. Иртнĕ çулта, унччен хи çулта пулнипе танлаштарсан, тракторсене юсамасăр вăтам шутпа 150 гектар чухлĕ ытларах ĕçленĕ. Кăçал механизаторсем тракторсене юсамасăр 175 гектар ытларах ĕçлеме сăмах панă.

Мускаври метрополитена çултан-çул пысăклатса пыраççĕ. Халĕ çĕнĕ линни туса пĕтерне, ăна ĕçе кĕртме хатĕрлесе çитернĕ. Çĕнĕ линни (Большое кольцо) ĕçе кĕрсен Курски вокзалтан Белорусски вокзала 10 минутра çитмелле пулать.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: «Ботанически сад» ятлă станцин çĕр айĕнчи вестибюлĕ.
Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Кашни япалана тунă çĕрте металл перекетлессишĕн

Январĕн 10-мĕшĕнче автомобильпе трактор промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн центральнăй комитечĕ Мускаври Сталин ячĕпе тăракан заводри çамрăк рабочисемпе специалистсен пуçарăвĕ çинчен сӳтсе явнă. Вĕсем кашни япалана тунă çĕрте металл сахалтарах пĕтерессишĕн ăмăртса ĕçлессине пуçарнă.

Президиум ларăвне автомобильпе трактор промышленноçĕн Мускаври завочĕсен руководителĕсем, профсоюз завкомĕсен председателĕсем пынă. Президиум ларăвĕнче çак ăмăртăва пуçаракансем—Кокошка тата Селиверстов бригадирсем, отделени начальникĕ Заговалов, Елагин техник, завком председателĕ Грузинцов сăмах тухса каланă. Вĕсем производствăра организаципе техника тĕлĕшĕнчен çĕнĕ йĕркесем туни çинчен, çакă вара пиншер тонна металл перекетлеме май пани çинчен каласа кăтартнă.

Автомобильпе трактор промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн центральнăй комитечĕн президиумĕ автозаводра ĕçлекенсен пуçарăвне ырланă, профсоюз организацийĕсене çав пуçарăва ытти предприятисенче те анлă сарма хушнă.

(ТАСС).

Металлургсен Техника çурчĕ

МАГНИТОГОРСК, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Металлурги комбинатĕнче Техника çуртне уçнă. Унта металлурги комбинатĕнчи мартен цехĕсенче ĕçлекен сталеварсем, мастерсем тата инженерсем Ленинградри политехника институчĕн профессорĕ, техника наукисен докторĕ Морозов юлташ тĕп мартен кăмакисенче кӳкĕрте металпа шлакран уйăрмалли майсем çинчен вуланă лекцие интересленсе итленĕ. Ку вăл—Техника çурчĕ кăçал малтанхи хут иртгернĕ лекци.

Техника çуртĕнче тата комбинат цехĕсенче иртнĕ çулталăкра техника тата экономика ыйтăвĕсемпе 300 лекци ытла пулнă. Нумай лекцисене иртгернĕ чухне мĕн каланине ăнланса илме пулăшакан кинофильмсем кăтартнă.

Техника çурчĕ Магнитогорскри металлургсемшĕн стахановла ĕç опычĕпе пĕрпĕрне паллаштарма пухăнмалли вырăн пулса тăнă.

Тăван çĕршыва йывăç ытларах хатĕрлесе парар!

Турттарас ĕçе вăйлатас пулать

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Штанашри Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем йывăç хатĕрлемелли плана срокчен тата иртгерсе тултарчĕç. Вĕсем, Тăван çĕршыва йывăç ытларах хатĕрлесе парас тесе, халĕ те вăрманта ĕçлеççĕ. Юлашки вăхăтра «Путь Ильича» колхоз членĕсем те чылай ӳсĕм турĕç. Районта çавăн пек паха тĕслĕхсем сахал мар.

Çапах та чылай колхозсен руководителĕсем малта пыракансен опычĕпе усă курма тăрăшмаççĕ, колхозниксене ĕçе тĕрĕс йĕркелеме пулăшмаççĕ. Булганин ячĕпе тăракан колхоз вăрман хатĕрлевĕнче юлса пырать. Нумаях пулмасть колхозран 30 çын вăрмана ĕçлеме кайнă. Вĕсемпе пĕрле колхоз председателĕ Яралайкин юлташ та кайнă. Вăл колхозниксене ĕçе вырнаçтармасăрах киле таврăннă. Пĕр-ик кун ĕçлесен, колхозниксем те киле килнĕ. Колхозри пуçламăш парторганизаци вăрман хатĕрлемелли плана тултарасси çинчен сахал мар решенисем йышăннă, анчах решенисем хут çинче çеç юлнă.

Вăрман хатĕрлемелли сезон пуçланнăранпа вăхăт нумай иртрĕ. Район каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана çуррине çеç тултарнă. Январĕн 1-мĕшĕпе 5-мĕшĕ хушшинче районти колхозсем пурĕ те 800 кубометр ытларах çеç çул хĕррине илсе тухнă. Малашне те çавăн пек хăвăртлăхпа ĕçлесен района сезонти плана тултарма тата виç-тăват уйăх кирлĕ. Çак кунсенче йывăç турттарас ĕç татах вăйсăрланчĕ. Январĕн 8-мĕшĕнче вăрманта пурĕ те 8 лавă çеç ĕçленĕ. Вăрманта касса хатĕрленĕ йывăç нумай. Ăна хăвăртрах турттарса кăларасси—вăрманпромхоз коллективĕпе колхозсен тивĕçĕ.

В. ЧОБАЙКИН.

Малта пыракан колхозсемпе танлашмалла

КОМСОМОЛЬСКИ. Пĕрлешсе пысăкланнă «Красная звезда» колхоз членĕсем кăçалхи сезонта вăрман ĕçĕнче нихçан пулман хастарлăхпа ĕçлерĕç. Йывăç хатĕрлемелли плана ытти колхозсенчен малтан тултарса, колхоз республикăри Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕ.

Мичурин ячĕпе тăракан колхоз та государство заданине чыслă пурнăçларĕ. Калинин ячĕпе, Ульянов ячĕпе тăракан, «Гвардеец», «Нива», «Çĕнтерӳ» тата ытти хăшпĕр колхозсен членĕсем Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе çак кунсенче пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

Малта пыракан колхозсен ĕç опычĕ çакăн çинчен калать: ĕçе тĕрĕс йĕркелесен, колхоз председателĕсем ответлăха туйсан, кашни колхоз плана срокчен тултарма пултарать. «Красный маяк» колхоз иртнĕ сулсенче плана ăнăçлă тултарса пынă. Халĕ вăл юлса пыракан колхозсенчен пĕри шутланать. Çак колхоз членĕсен 1 700 фестметр йывăç касса хатĕрлемелле, вĕсем 200 фестметра яхăн çеç хатĕрленĕ. Октябрь уйăхĕнче вăрмана 14 çын кайнă. Вĕсем 134 фестметр касса хатĕрленĕ те киле таврăннă. Ноябрь уйăхĕнче ку колхозран пачах ĕçлемен. Декабрь уйăхĕ вĕçленес умĕн çеç 8 çын вăрмана кайнă. Вĕсем куллен 4—5 фестметр кăна касса хатĕрлеççĕ. Плана вăхăтра тултарас тесен колхоз правленийĕн çынсем хушса ямалла тата ĕçе тĕрĕс йĕркелеме ответлă çынна хушмалла.

«Гигант» колхоз—вăйлă колхоз. Анчах вăл вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе кăçал та, иртнĕ çулхи пекех, юлса пырать. Колхоз председателĕ З. Быков юлташпа пуçламăш парторганизаци секретарĕ А. Львов юлташ колхозниксен ĕçне тĕрĕс йĕркелеме тăрăшмаççĕ. Колхозăн 1.830 фестметр касмалла, 1.700 фестметр турттармалла пулсан, 735 фестметр каснă, 516 фестметр турттарнă. Колхоз правленийĕ вăрманта ĕçлеме бригада туман. Октябрь уйăхĕнче вăрманта 14 çын, ноябрь уйăхĕ вĕçленес умĕн 3 çын кăна ĕçленĕ. Декабрь уйăхĕн пуçламăшĕнче пĕр çын та ĕçлемен. Хальхи вăхăтра 8 çын кăна ĕçлет Каснă йывăça турттаракансем çинчен те çавнах каламалла. Колхозниксем 17 лавпа пĕр çĕртен тиеççĕ тата пĕр çĕре пушатаççĕ. Пурте тиесе е пушатса пĕтерсен çеç лавсем çула тухаççĕ. Çапла тунипе лавçăсен ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ. Юнашар ĕçлекен ытти колхоз лавçисем кунне икшер хутлана вăхăтрах «Гигант» колхоз лавçисем пĕрер çеç хутлаççĕ.

«Заветы Ильича» колхозпа Калинин ячĕпе тăракан колхозсен лавçисем пĕр баракра пурăнаççĕ, пĕр делянкăран йывăç турттараççĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз лавçисем, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, йывăç турттармалли плана паянхиран тултарассишĕн кĕрешеççĕ, кунне виçшер хутлаççĕ. «Заветы Ильича» колхоз лавçисем кунне икшер çеç е каярах та хутлаççĕ. Хăшпĕр чухне йывăç турттарма пăрахса пасара вутă сутма сӳресе хаклă вăхăта сая яраççĕ.

Январь уйăхĕ—вăрман хатĕрлевне татса паракан уйăх. Кайра пыракан колхозсен, малта пыракан колхозсен паха опычĕпе усă курса, йывăç турттарас ĕçре татăклă улшăну тумалла. Колхоз правленийĕсемпе пуçламăш парторганизацисен Сталин юлташ патне янă çырура йышăннă обязательствăсене чыслă пурнăçлама пĕтĕм вăя мобилизацилемелле. Вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе юлса пыракан колхоз правленийĕсене малта пыракансен опычĕпе паллаштарни, колхозниксене мобилизацилеме пулăшни кирлĕ.

А. ЕРЕМЕЕВ.
Н. КВАСОВ.

Халăх демократи çĕршывĕсенче

Пĕтĕм Польшăри строительсен конференцийĕ

ВАРШАВА, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Промышленность строительствин министерствинче Пĕтĕм Польшăри строительсен конференцийĕ уçалнă. Унта 300 делегат пухăннă. Вĕсем—çĕршыври строительство организацийĕсен, наукăпа тĕпчев ĕçĕсен институчĕсен тата пысăк предприятисен строительствисенче ĕçлекен рабочисен коллективĕсен представителĕсем. Унта çĕршыври 63 пысăк стройкăран представительсем пухăннă. Конференци строительствăри ĕçсене мĕнле организацилесси çинчен сӳтсе явать.

Конференцие уçса, строительствăсене организацилес тата механизацилес тĕлĕшпе ĕçлекен институт директорĕ М. Зайбертку конференцин тĕллевĕ ССР Союзĕнчи строительство опычĕпе паллаштарасси, пурлăхсемпе хатĕрсене тирпейсĕр расходлассине пĕтермелли майсене шыраса тупасси пулать, тенĕ.

Ĕççыннисен ăмăртăвĕ

ВАРШАВА, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри пĕрлештернĕ рабочи партийĕ туса хунăранпа вунă çул туласси çывхарать. Çавна май Польшăри ĕççыннисем хушшинче уяв умĕнхи социализмлă ăмăрту сарăлать. Лодзьри Окжея ячĕпе тăракан пир-авăр фабрикинчи рабочисем чи лайăх пир-авăр тĕртекен ятне илме тивĕçлĕ пулассишĕн ăмăртса ĕçлеме тытăннă, Польшăри пир-авăр тĕртекенсене пурне те хăйсенчен пример илме чĕннĕ.

Вĕсен пуçарăвне çĕршыври пир-авăр тĕртекен пысăк предприятисен—Сталин ячĕпе тăракан фабрикăн, Дзержинский ячĕпе тăракан предприятин, Мархлевский ячĕпе тăракан фабрикăн коллективĕсем тата ытти предприятисенче ĕçлекенсем те хапăл туса йышăннă.

Гданьскри верфьре ĕçлекен рабочисем çĕнĕ виçĕ карапа срокчен туса пĕтернĕ. Вĕсем январь уйăхĕнче тепĕр виçĕ сутулӳ карапне туса пĕтерме, вĕсен техникине сăнаса пăхмалла тума йышăннă.

Çĕнĕ Гутăри тата Варшавăри строительсем те, Познаньри, Радомри тата çĕршыври ытти хуласенчи рабочисем те хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ.

Ĕç фронтĕнче

БУДАПЕШТ. (ТАСС). Венгри Халăх республикинчи малта пыракан коллективсемпе уйрăм стахановецсем пилĕк çуллăхăн иккĕмĕш çулĕн планĕсене ăнăçлă тултарассишĕн ăмăртса ĕçленипе пысăк çитĕнӳсем тунă, халĕ вĕсем татах та пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. 1952 çулта Венгрин çĕр кăмрăк промышленноçĕ иртнĕ çулхинчен 20 процент ытларах çĕр кăмрăкĕ кăлармалла. Татабаньри Матиас Ракоши ячĕпе тăракан шахтăн коллективĕ пуçарнипе шахтерсем хушшинче Совет Çарĕ Венгрие ирĕке кăларнă кун—апрелĕн 4-мĕшĕ—çывхарнă ятпа çĕр кăмрăкĕ нумайрах кăларассишĕн ăмăртса ĕçлесси сарăлса пырать. Кăçалхи пĕррремĕш кунсенчен пуçласах шахтерсем пĕр кунлăх заданисене чылай иртгерсе тултараççĕ.

Апрелĕн 4-мĕшĕнчи уяв ячĕпе çĕршыври ытти предприятисенче те ăмăрту сарăлса пырать. Озд хулинчи металлурги комбинатĕнчи мартен цехĕн коллективĕ январĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕнче плана 102 процент, январĕн 3-мĕшĕнче—103,6 процент тултарнă. Сталеварсен М. Миковеги ертсе пыракан бригади кашни кунах заданисене пĕр хут çурă тултарса пырать.

Коопераци суту-илĕвĕ вăйланать

СОФИЯ, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарире ĕççыннисен пурнăçĕ кунганкун лайăхланса пырать. Халăх промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç нумайрах та нумайрах туянма тăрăшать. Халăх ыйтнине тивĕçтерме Болгарири ялсенче çĕнĕ магазинсемпе ларексем нумай уçаççĕ. Юлашки уйăхсенче çеç ялсенче çĕнĕрен 715 магазин уçнă, киввисенчен икĕ пин магазина пысăклатнă тата тĕпренех юсанă.

Кооперацин центрти союзĕ товар илекенсем патне яракан таварсен ассортиментне икĕ хут ытла пысăкланнă.

Ялти потребительсен кооперативĕсенче, Совет Союзĕнчи суту-илӳ организацийĕсен примерĕ тăрăх, товар сутас ĕçре йĕркелĕх тăвассишĕн, культурăллă суту-илӳшĕн кĕрешесси сарăлса пырать. Пиншер продавецсем «Кооператив магазинĕнчи чи лайăх продавец» ятне илессишĕн социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ.

Колхозсен обществăллă хуçалăхне малалла хăвăрт аталантарса пырассишĕн

* * *

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатма мĕн чăрмантарать

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана пурнăçлассишĕн кĕрешсе, Куславкка районĕнчи малта пыракан колхозсем чылай пысăк çитĕнÿ турĕç. Тĕслĕхшĕн «Динамо» колхоза илĕпĕр. Виçĕ çуллăх плана пурнăçлама тытăннă малтанхи кунсенченех кунти колхоз руководителĕсем чи кирлине— выльăх апачĕ ытлăн-çитлĕн хатĕрлеме кирлине асра тытса ĕçлесе пычĕç. Çавна май колхоз виçĕ çуллăх плана 1950 çултах тултарчĕ. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те ÿссех пырать. Унăн продукчĕсене государствăна парса тата сутса артель çулсерен пысăк тупăш илет.

«Правда», Калинин ячĕпе тăракан колхозсенче те ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Анчах та районта çавăн пек колхозсем сахал. Нумай ялхуçалăх артелĕсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тивĕçлипе хакламаççĕ. Сăмахран, Ленин ячĕпе тăракан (председателĕ Федоров юлташ), «Победа (председателĕ Абрамов юлташ) колхозсенче выльăх шучĕ çителĕксĕр. Ленин ячĕпе тăракан колхозăн 33 ĕне выльăх, 55 сысна, 124 сурăх, 1.500 пуç кайăк-кĕшĕк çитмест. Лашасем енĕпе те плана тултарман. Ытти чылай колхозсенче те çавăн майлах. Çавăнпа та ĕнтĕ район пĕр выльăх енĕпе те плана тултарайман.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ. Сĕт суса илмелли плана пĕр ферма та тултарман. Вăтам шутпа кашни ĕнерен районта 970 литр кăна сĕт суса илнĕ. Çакă вăл планпа пăхнинчен 630 литр сахалтарах.

Плана тултарма чăрмантаракан сăлтавсенчен пĕри—çамрăк выльăхсене салатса пĕтерни, начар пăхса усрани пулать.

Выльăх апачĕ туса илессине япăх организациленĕ. Паллă ĕнтĕ, пĕр улăм-арпапах пысăк тухăç паракан выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме май килмест. Çак чăнлăха колхозсен руководителĕсем шута илесшĕн мар, вĕсем фермăсем валли çиреп апат никĕсĕ туса хурассишĕн тимлĕ тăрăшмаççĕ.

Тырпул тата выльăх апачĕ акмалли тĕрĕс пусă çаврăнăшĕсем тăвасси юлса пырать. Нумай çул тата пĕр çул ÿсекен курăксем, тымарçимĕçсем, силос тумалли культурăсем çителĕклĕ акса тумасăр выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ниепле те вăйлатма çук. Çавна районта манăçа хăвараççĕ. 1951 çулта нумай çул ÿсекен курăксем акакан лаптăк икĕ хут чакни те çавăн çинчен калать. Пĕр çул ÿсекен курăксем, тымарçимĕçсем сахал акса тăваççĕ, вĕсен тухăçлăхĕ ÿссе пымасть.

Курăксем акас ĕçе хакламаннине пула пусă çаврăнăшĕсене пилĕк колхозра кăна йĕркелесе çитернĕ. Выльăх апачĕ туса илмелли пусă çаврăнăшĕсем çинчен калама та кирлĕ мар, вĕсене йĕркелес пирки, калаçнисĕр пуçне, урăх нимех те туман.

Нумай колхозсенче çак таранччен выльăхсене хĕллехи вăхăтра пăхса усрассине йĕркелесе çитермен. Ленин ячĕпе тăракан колхозра апата фермăсем çывăхне турттарса хатĕрлемен.

1951 çулта выльăх апачĕ хатĕрлес енĕпе районта пачах çителĕксĕр ĕçленĕ. Апат хатĕрлекен бригадăсене ячĕшĕн тунăччĕ, анчах вĕсем, ялхуçалăх пайĕн специалисчĕсем тивĕçлĕ пулăшу паман пирки, çулла саланса кайрĕç. Çавăн пек пулса тухнă, сăмахран, Киров ячĕпе тăракан, «Ударник», «Победа» колхозсенче.

Колхозсене выльăх апачĕ çителĕклĕ туса илме МТС-ăн пысăк пулăшу памалла. Халлĕхе вăл хăйĕн тивĕçне начар пурнăçлать. Улăх-çарансене лайăхлатмалли, силос хывмалли плансене пĕлтĕр МТС тултараймарĕ.

Халĕ, хĕлле, выльăх апатне тĕрĕс расходлани уйрăмах кирлĕ. Районти ялхуçалăх пайĕн работникĕсем ку тĕлĕшпе колхозсене пысăк пулăшу памалла, вĕсен фермăсенче час-часах пулмалла, апата хатĕрлесе пама вĕрентмелле. Халĕ зоотехниксем (ялхуçалăх пайĕн главнăй зоотехникĕ Николаева юлташ) çавăн пек пулăшу çителĕксĕр параççĕ, вĕсем вăхăта ытларах кабинетра ирттереççĕ.

Чылай колхозсенче выльăх апатне тĕрĕс тыткаламаççĕ, кирлĕ-кирлĕ мар çĕре салатса пĕтереççĕ. «Родина» ялхуçалăх артелĕн правленийĕ ферма путеккисене килсенче пăхма салатса панă. Çавна май колхозниксем путексене кирлинчен ытларах апат илме хăтланаççĕ. «Победа» колхоз председателĕ колхозниксен пухăвĕнче сÿтсе явмасăрах улăм сутнă. Çав вăхăтрах колхозăн хăй валли те улăм çитмест.

Кормозапарниксем 12 колхоз çеç тунă.

Витесем çителĕксĕрри те обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хытă чăрмантарать. Чăн та, 1951 çулта район, пĕтĕмĕшпе илсен, витесем лартмалли плана ирттерсе тултарчĕ, анчах хăшпĕр колхозсем плана тултарайман.

Виçĕ çуллăх план [illegible] фермăсенчи ĕçсене анлă механизацилемелле. «Динамо», «Правда» колхозсемсĕр пуçне ыттисенче ĕçсене механизацилес тĕлĕшпе нимех те тумаççĕ.

Фермăсене шыв илсе пырассине механизацилесси ытла та юлса пырать. Выльăхсене ытларах тарасасенчи шыва ал вĕççĕн ăсса шăварма тивет. Кун пек чухне фермăсене шыв çителĕклĕ илсе пыма кансĕрри каламасăрах паллă.

Колхозсенче ветродвигательпе ĕçлекен тарасасем тума тытăнмалла, водопроводсем тăвасси çинчен те шухăшласа пăхма вăхăт.

Районта фермăсенче ĕçлекенсен пĕлĕвне ÿстерсе пыма сахал тăрăшаççĕ. Нумай çĕрте зоотехника курсĕсенче занятисем йĕркеллĕ иртмеççĕ, выльăх-чĕрлĕх пăхакансен социализмлă ăмăртăвне кирлĕ пек организацилемен.

Фермăсенче лайăх ĕçлекен, малта пыракан çынсем сахал мар. «Динамо» колхозри Н. Морешова, М. Иванова дояркăсем пахă çитĕнÿсем тăваççĕ. Анчах та малта пыракансен опытне пур фермăсенче те пурнăçламалла тăвас тесе специалистсем пуçарулăх кăтартмаççĕ, малта пыракан опыта сармаççĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсемпе малашне ниепле те килĕшме çук ВКП(б) райкомĕн, райсовет исполкомĕн, вĕсен ялхуçалăх пайĕсен пысăк ыйтусене татса пама, выльăх-чĕрлĕхе тĕрĕс-тĕкел хĕл каçарма тивĕçлĕ ĕçсем туса ирттермелле.

О. МИХАЙЛОВА.

* * *

Вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешÿ

МУРКАШ. Энгельс ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлерĕ. Артель членĕсем малта пыракан мичуринла агрономи наукин кăтартăвĕсене пурнăçласа, вăйлă тырпул çитĕнтерчĕç, акнă мĕнпур çĕр лаптăкĕн кашни гектарĕнчен вăтам шутпа 100 пăт ытла тĕштырă пухса кĕртрĕç. Уйрăм бригадăсем тата та пысăкрах тухăçлă тырпул туса илчĕç. Сăмахран, Емельянов юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади 22 гектар çинче кашни гектартан 20-шер центнер ыраш туса илчĕ.

Колхоз членĕсем çитес çуракине тимлĕ хатĕрленеççĕ. Вĕсем çуркуне акма вăрлăх пур культурăсем тăрăх та çителĕклĕ хывса хăварнă, кĕркуннех сортласа тасатнă. Кăçал колхоз таса та сортлă вăрлăх кăна акать.

Тырпул тухăçлăхне ÿстермелли тĕп майсенчен пĕри вăл—çĕрпе пĕлсе усă курасси тата ăна çемçетме пĕлесси. Çакна асра тытса, колхоз правленийĕ çĕре вырăнти тата минераллă удобренисемпе çемçетесси çине тимлĕ пăхать. Кунта çĕрпе мĕнле усă курнине кашни çул уйрăм кĕнеке çине çырса пыраççĕ. Çав кĕнекере кашни пусăна удобренисем мĕн чухлĕ кăларнине, мĕн тарăнăш сухаланине, мĕн чухлĕ тырпул туса илнине тĕплĕ çырса пыраççĕ. Çакă, паллах, колхоз правленине çĕр пуянлăхĕпе пĕлсе усă курма нумай пулăшать.

Кăçалхи çул колхоз уя 14.400 лав тислĕк, 600 тонна торф кăларма, 400 тонна минераллă удобренисем кÿрсе килме палартнă. Хальхи вăхăтра уя 9.150 лав тислĕк, 450 тонна торф кăларнă, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл чылай пухнă, 250 гектар çинче юр тытнă. Уя кăларнă торфпа тислĕке пĕтĕмпех компост тунă. Çак кунсенчех минераллă удобренисем кÿрсе килме тытăнаççĕ.

Колхозри парторганизаци çуракине хатĕрленес ĕçе тимлĕн сăнаса тăрать. Вăл юлса пыракан бригадăсене çийĕнчех малтисемпе танлашма пулăшать. Социализмлă ăмăрту итогĕсене кăтарту хăмисем, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем урлă пĕлтереççĕ. Коммунистсемпе комсомолецсем вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешÿре хăйсен хастарлă ĕçĕпе ытти колхозниксене хавхалантараççĕ. Парторганизаци пуçарнипе ялхуçалăх машинисене, урапасунасене, ут таврашĕсене пĕтĕмпех юсаса пĕтернĕ. Колхозра транспортпа обоз мастерскойĕ уçаççĕ.

Кăçал МТС колхоза ятарласа пĕр трактор бригади çирĕплетнĕ. Çакă вăл çĕрĕç культурине, тырпул тухăçлăхне чылай ÿстерме май парать.

Колхоз членĕсем çак кунсенче пулса иртнĕ пухура çĕнĕ обязательство илчĕç: гектартан 110 пăт тĕштырă, 35 пăт кантăр сÿсĕ, 900 пăт çĕрулми, тухăçлă тымарçимĕç, курăксем туса илмелле, уй-хире 30.000 тĕп йывăç лартмалла, 15 пĕве тумалла.

Илнĕ обязательствăна чыслă пурнăçлассишĕн ăмăрту анлă сарăлчĕ.

П. СЕМЕНОВ.

Сÿс-кантăртан пысăк тупăш

Республикăри чылай колхозсем техникăллă культурăсем акса пысăк тупăш илеççĕ. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз пĕлтĕр 20 гектар çинче кантăр акса тунă. Государствăна сÿс-кантăр панăшăн колхоз пурĕ 680.333 тенкĕ тупăш илнĕ.

Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозра, Канаш районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан, «Коминтерн», «1-ое Мая» колхозсенче сÿс-кантăр туса илме ятарласа бригадăсем тунă. Бригадăсенче ĕçлекенсене пур майсемпе те хавхалантарса пыраççĕ.

Элĕк районĕнчи вăрлăх пахалăхне тĕрĕслекен инспекци колхозсем çураки валли хатĕрленĕ вăрлăхсен пахалăхне тĕрĕслес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: вăрлăх пахалăхне тĕрĕслекен лабораторире. Инспекци начальникĕ И. Кириллов тата старши лаборантка А. Ермолаева Энгельс ячĕпе тăракан колхоз хатĕрленĕ вăрлăхсен пахалăхне тĕрĕслеççĕ.

С. ВИКТОРИНОВ фотоÿкерчĕкĕ

* * *

Çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатмалла

КАНАШ. Районти нумай колхозсем ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ пирĕн республикăри колхозсем умне ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе лартнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

Иртнĕ çулта районти чылай колхозсем вăйлă тырпул туса илчĕç. Акă, Йăлмачари «1-ое Мая» колхоз 1951 çулта 235 гектар çинчен 17-шер центнер ытларах ыраш пухса кĕртрĕ. Çавăн пекех Мăкăрти Хрущев ячĕпе тăракан колхоз та иртнĕ çулта вăтам шутпа кашни гектартан 14-шар центнер ытларах тĕштырă туса илнĕ.

Малта пыракан колхозсем халĕ çитес çулла вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Вĕсем çуракинче акма лайăх пахалăхлă, сортлă вăрлăх хатĕрлеççĕ, уй-хире удобренисем кăлараççĕ, ялхуçалăх машинисене юсаççĕ, юр ытларах тытса хăварас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ тата ытти хĕллехи агротехникăллă ĕçсене тăваççĕ. Сăмахран, Асхвари «Красное пламя» колхоз юлашки вăхăтра çуракине хатĕрленес ĕçе чылай вăйлатрĕ. Хĕллехи агротехникăллă ĕçсен планне тунă, ăна колхозниксемпе сÿтсе явса çирĕплетнĕ. Çуракинче акмалли 1.068 центнер вăрлăха лайăх сортласа, тасатса, акма юрăхлă кондицие çитернĕ. Вăрлăхсене тĕрĕслекен лабораторири «Красное пламя» колхозри вăрлăхсен шăтас пахалăхĕ питех те лайăх пулнине палăртнă. Тырпул тухăçлăхне ÿстерес ĕçре удобренисемпе пĕлсе тата туллин усă курни пысăк вырăн йышăннине шута илсе, колхозри бригадăсем уй-хире тислĕк ытларах кăларассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Юлашки вăхăтра вĕсем уй-хире 4.300 лав ытла тислĕк кăларнă. Çавăнпа пĕрлех кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ чылай пухнă.

Колхоз иртнĕ çулсенче минераллă удобренисемпе çителĕклĕ усă курайман. Кăçал 330 центнер минераллă удобренисем кÿрсе килнĕ, 300 гектар çинче юр тытса хăварнă.

Çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитес тĕлĕшпе Карăклăри Крупская ячĕпе тăракан колхоз та лайăх ĕçлет. Вăрлăхсене пурне те лайăх сортласа, тасатса хунă. Колхоз çак кунсенче 280 центнер минераллă удобренисем кÿрсе килчĕ, уя 1.500 лав тислĕк кăларчĕ, 153 гектар çине юр тытрĕ.

Анчах та, пĕтĕмĕшпе илсен, районти колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. Колхозсем паянхи куна мĕнпур вăрлăхсенчен 85 процентне кăна сортласа, тасатса, акма юрăхлă тунă. Мичурин ячĕпе тăракан, «Парижская Коммуна» тата ытти хăшпĕр колхозсем вăрлăхсене сортлама халĕ тин тытăнаççĕ.

Кивĕ Шелттемри Сталин ячĕпе тăракан колхозра «çуракиччен вăхăт пур-ха» тесе, лăпланса лараççĕ. Колхозра çитес çуракинче акма 700 центнер ытла вăрлăх хатĕрленĕ. Анчах вĕсене кĕркунне çапса кĕртнĕ чухне пĕр хутчен триерпа аланă та, урăх вара сортлама, акма юрăхлă кондицие лартма шутламаççĕ, лайăх та паха сортлă вăрлăх хатĕрлессишĕн тăрăшмаççĕ. Колхозăн 5 сеялка, 35 плуг пур. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем юсавсăр. Вĕсене юсаса лартас тĕлĕшпе колхоз правленийĕ нимĕнле мерăсем те йышăнман. Колхоз правленинче ĕçлекенсем кăçал çуракинче миçе гектар акмаллине те пĕлмеççĕ, «Ялхуçалăх пайĕ план паман-ха», теççĕ. Колхозра юр çунăранпа та уя пĕр лав тислĕк кăларман. Çавăн пекех Мичурин ячĕпе тăракан колхозра та иртнĕ çулта пухса кĕртнĕ клевер вăрлăхне халĕ те çапса, тĕшĕлесе пĕтермен.

Иртнĕ кĕркунне çанталăк типĕ тăчĕ, тăпран чылай аялти сийĕсем те типсе кайрĕç. Çавăнпа кăçал уя юр тытса хăварас тĕлĕшпе нихçанхинчен тимлĕ ĕçлес пулать. Чылай колхоз руководителĕсем çак ĕçе хакламаççĕ. «Красное знамя», Шверник ячĕпе тăракан, «Красная Армия» колхозсем ку тĕлĕшпе паян кунччен нимĕн те туман. Чкалов ячĕпе тăракан, «Аниш» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем вара 4—10 гектар çине юр тытса хăварнипех лăпланнă.

Ялхуçалăх машинисене юсас ĕç те вăраххăн пырать. Сăмахран, колхозсенчи 120 сеялкăран январь уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне 52 сеялкине çеç юсанă. «Красный Октябрь», «Искра», «Аниш», Ворошилов ячĕпе, Горкин ячĕпе тăракан колхозсенче, ялхуçалăх машинисене юсамалли вăхăтра, тимĕрçĕ лаççисене хупса лартнă, машинăсене халех юсама кирли çинчен аса та илмеççĕ.

Çуракине ăнăçлă ирттересси туртăм вăйĕнчен те нумай килет. Çавах та хăшпĕр уйрăм колхозсенче лашасемпе ĕç вăкăрĕсене пăхса усрас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Шаккăлти «Искра» колхоза (председателĕ Г. Тимофеев) асăнмалла. Колхозра лашасем сивĕ те таса мар витесенче тăраççĕ, вĕсене начар апат çитереççĕ, вăхăтра шăвармаççĕ. Çавăнпа лашасем ырхан, вĕсем ĕçре час ывăнаççĕ. Кунсăр пуçне, хăшпĕр колхозниксем лашасене кÿлсе тухсан вĕсене хĕнесе, çапса пĕтереççĕ. Лашасене кÿлсе çÿремелли хатĕрсем те çитмеççĕ. Юсавсăр çÿмсенсемпе ĕнерчĕксем кÿлсе çÿренине пула, чылай лашасен çурăмĕсемпе мăйĕсем шăйăрăлса, пăсăлса пĕтнĕ. Çитменнипе тата ут таврашĕсене колхозниксен килĕсенче усраççĕ, çавăнпа вĕсене ĕçе кайнă чухне шыраса та тупма çук. Конюхсем хушшинче нимĕнле массăллă ĕç те тумаççĕ.

Тырпул тухăçлăхне ÿстерсе пырас тесен, мĕнпур агротехникăллă ĕçсене вăхăтра пурнăçласа пымалла, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕсемпе анлă усă курмалла. Çак ĕçре колхозниксене агрономи наукине тĕплĕ вĕренни пулăшать. Анчах та районта агрозоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссем питех те начар ĕçлеççĕ. Çак ĕçе районти ялхуçалăх пайĕ те çителĕксĕр ертсе пырать. «Аниш», «Искра», «Мотор», Хрущев ячĕпе тăракан колхозсенче, сăмахран, агротехникăна вĕренмелли курссен занятийĕсем йĕркеллĕ пулса пымаççĕ.

Çуракине пур енчен те тĕплĕ хатĕрленсе çитессишĕн кĕрешмелле.

С. АСЛАН.

Обществăллă хуçалăха аталантармалли майсемпе туллин усă курмалла

Колхозсене пĕрлештерсе пысăклатни артель хуçалăхне аталантарас ĕçре шалти резервсемпе лайăхрах усă курма вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк майсем уçса пачĕ. Халĕ МТС-сен тата колхозсен машинисемпе ĕçлеме, ĕç тухăçлăхне ÿстерме, çĕрĕç культурине татти-сыпписĕр ÿстерсе пыма пур майсем те çителĕклĕ.

Колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетес ĕçре ялхуçалăх артелĕсенчи ĕç вăйĕçе туллин усă курни пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та районти малта пыракан колхозсем ку ыйту çине тимлĕ пăхаççĕ. Çавăн пек колхозсенче ĕçлеме пултаракан колхозниксем пурте колхоз производствине активлă хутшăнаççĕ, çулталăк хушшинче кашни колхозник 300-шер ĕçкунĕ е ытларах та тăваççĕ.

Ку тĕлĕшпе «Волга» колхоза (председателĕ Ефремов юлташ) илсе пăхма пулать. Çак колхозра ĕçлеме пултаракан колхозниксем, çавăн пекех ватă çынсем те çулталăк тăршшĕпех колхоз производствинче тăрăшса ĕçлеççĕ. 1950 çулта, январь уйăхĕнче, августра ĕçленипе танлаштарсан, колхозниксенчен 70 проценчĕ ĕçе хутшăннă (районĕпе илсен, ку цифра — 55 процент çеç пулнă). Колхозри мĕнпур ĕçкунĕсенчен 10 процентне ватă колхозниксем тунă.

Ĕç вăйĕпе лайăх усă курнине пула, колхоз тырпул тухăçлăхне ÿстермелли плана тултарчĕ, выльăх-чĕрлĕх йышне 1953 çулта пулмалли виçене çитерчĕ, обществăллă çурт-йĕрсем чылай туса лартрĕ. 1951 çулта колхозра 30 пин ытла саман кирпĕч тунă, самантан кайăк-кĕшĕк вити лартнă. Пахча çимĕç вăррисем тăвас, пахча çимĕçсене парниксенче ÿстерес, сад ĕрчетес ĕçсене вăйлатса пыраççĕ. Колхоз 1951 çулта пахча çимĕçсенчен тата саçран кăна 92.250 тенкĕ тупăш илнĕ. Тырпул тухăçлăхне ÿстернĕшĕн 337 колхозника ĕçшĕн хушса тÿленĕ.

Районти колхозсенче ĕç тухăçлăхĕ çултан-çул ÿсет, 1950 çулта ĕçлеме пултаракан кашни колхозник 313 ĕçкунĕ тунă. Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, 1951 çулта вăл цифра тата пысăкрах. 1950 çулта, 1949 çулхипе танлаштарсан, колхозниксем ĕçе 22 процент ытларах хутшăннă. Пĕрлешсе пысăкланнă 12 колхозра ĕç тухăçлăхĕ 3,5 процент, уйрăм колхозсенче—10 процент таран ÿснĕ.

Анчах та пур колхозсенче те ĕç вăйĕпе туллин усă кураççĕ теме çук. Хăшпĕр колхозсенчĕ халĕ те ĕç вăйĕн пысăк резервĕсемпе усă курмаççĕ. Ĕçлеме пултаракан колхозниксем колхоз производствинче çулталăк тăршшĕпех ĕçлемеççĕ, хăшпĕрисем вара тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра кăна ĕçе хутшăнаççĕ. Сăмахран, «Досаево» колхозра 1950 çулта август уйăхĕнче колхоз производствинче 518 çын ĕçленĕ пулсан, январьте 83 колхозник çеç ĕçленĕ. Январьте август уйăхĕнчинчен 8 хут сахалтарах ĕçкунĕ тунă.

1950 çулта районти колхозсенче мĕнпур колхозниксенчен вунă пайран пĕр пайĕ ĕçкунĕсен обязательнăй минимумне тултарман, хăшпĕр колхозсенче ку цифра 25 процента çитет. «Герой» ялхуçалăх артелĕнче ĕçлеме пултаракан 346 колхозникран—85 çын, «Стахановец» колхозра 275 колхозникран 60 çын ĕçкунĕсен минимумне тултарман. Асăннă колхозсен правленийĕсем ĕç дисциплинине çирĕплетме кирлĕ майсем йышăнмаççĕ, колхозниксене тырпул тухăçлăхне ÿстерес, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ÿстерес задачăсене пурнăçлама мобилизацилемеççĕ. Çакă вăл обществăллă хуçалăха аталантарма чарса тăратьĕ «Герой», «Стахановец», «Досаево» колхозсем икĕ çул ĕнтĕ умлăн-хыçлăн тырпул тухăçлăхне ÿстермелли, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултараймарĕç.

Ĕç—обществăллă пуянлăхăн çăлкуçĕ. Мĕнпур колхозниксем пикĕлми хăватпа ĕçлесен кăна колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла хăвăрт тĕреклетме пулать, çапла вара, колхозниксен пурнăçĕ те çавăн чухлĕ хăвăрт лайăхланса пыма пултарать.

Ялхуçалăх артелĕн Уставĕ кашни колхозника колхоз производствинче тÿрĕ кăмăлпа ĕçлеме, ĕç тухăçлăхне ÿстерме, ĕç дисциплинине çирĕплетме хушать. Колхоз правленийĕсен кашни колхозника унăн ĕçри ăсталăхне, опытне шута илсе ĕç памалла, колхозниксем ĕçе мĕнле хутшăннине тĕрĕслесе тăмалла. Колхоз членĕсем ĕçкунĕсен минимумне мĕнле тултарни çинчен вăхăтран вăхăта колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче сÿтсе явмалла. Колхоз ĕçĕнчен пăрăнакансене общественноçăн сивлемелле, кахалсемпе кĕрешмелле. Кашни колхозник ĕçкунĕсен минимумне кашни тапхăртах тултарса пыма, ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пыма тивĕçлĕ.

Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес ĕçре çителĕклĕ усă курман резерв вăл—вырăнти тата минераллă удобренисем пулаççĕ. Районти колхозсем çуллен уя хальхинчен пĕрре çурă хут ытларах тислĕк, 50 пин тоннăран кая мар торф кăларма, ытти вырăнти удобренисемпе минераллă удобренисене чылай нумайрах хатĕрлеме пултараççĕ.

Уя удобренисем кăлармасăр вăйлă тырпул туса илме май çук. Вăл пурнишĕн те паллă. Çавăнпа та малта пыракан колхозсем çĕре удобренисемпе çултан-çул ытларах çемçетеççĕ, тырпул тухăçлăхне ÿстереççĕ. 1951 çулта «Сталинец» колхозра (председателĕ Лукин юлташ) хире 25 пин лав ытла тислĕк, 308 тонна торф тата ытти удобренисем чылай кăларнă. Кăçал та удобренисем хатĕрлес ĕçе лайăх йĕркеленĕ, уй-хир бригадисем ăмăртса ĕçлеççĕ. Ку таранччен уя 6 пин лав ытла тислĕк кăларнă, пин тонна ытла торф хатĕрленĕ. Торфа тислĕкпе хутăштарса купалаççĕ, компост тăваççĕ.

Малта пыракан колхозсен опытĕнчен çакă курăнать: торф тислĕкрен япăх удобрени мар, торфран лайăх хатĕрленĕ компост хăшпĕр чухне тислĕкрен те пысăкрах усă парать. Димитров ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Игнатьев юлташ) çакна лайăх ăнланаççĕ, уй-хире торф ытларах кăларма тăрăшаççĕ. Колхозниксем хĕл каçиччен 20 пин лавран кая мар торф хатĕрлеме пулнă. Торф кăларнă çĕрте куллен 14—15 лашапа 50 çын ытла ĕçлеççĕ. Ку тĕлĕшпе кашни уй-хир бригадинчех звеносем тунă. Торфа тислĕкпе пĕрле хутăштарса пысăк купасем тăваççĕ.

Анчах та нумай колхоз руководителĕсем вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕçе хакламаççĕ. Шупуç ял Советĕнчи «Гвардия», «Большевик», çавăн пекех Ворошилов ячĕпе, Жданов ячĕпе тăракан колхозсем уя удобренисем кăлармалли плана çултан-çул тултарса пымаççĕ, çавăнпа вĕсен тырпул тухăçлăхĕ те пĕчĕккĕ. Иртнĕ çулта «Досаево» колхозра кашни гектар çине 0,3-шер тонна кăна тислĕк кăларнă. Çакă вăл, паллах, вăйлă тырпул çитĕнтерме май памасть.

Ворошилов ячĕпе тăракан, «Красное Сормово», «Гигант», Буденный ячĕпе тăракан колхозсен çĕрĕсем çинче торф нумай. Анчах çав торфпа пачах çителĕксĕр усă кураççĕ.

Вырăнти удобренисем кирлĕ чухлĕ хатĕрлени колхозсене тырпул тухăçлăхне чылай ÿстерме май памалла. Хĕллехи вăхăтра кашни колхозрах кирлĕ чухлĕ удобренисем хатĕрлемелле, торфпа тислĕке хутăштарса компост тумалла. Пур колхозсенче те выльăх картишĕсем тавраш ĕнче тислĕк тата тислĕк шĕвекĕ пухмалли вырăнсем тумалла.

Колхозсенче ялхуçалăх специалисчĕсем пулăшнипе хĕлле торф кăларма план туса хатĕрлемелле, план пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. Агрономсемпе зоотехниксен тата колхоз руководителĕсен тивĕçĕ—тĕрлĕ удобренисем ытларах хатĕрлесси пулать. Çуракине хатĕрленнĕ май çавăн çинчен пĕр самантлăха та манма юрамасть.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттермелле, уйрăмах выльăхсем валли паха апат çителĕклĕ хатĕрлессишĕн çине тăрса кĕрешмелле. Улăх-çарансенчи тата уй-хире акакан курăксен тухăçлăхне ÿстермелле. 1951 çулта мĕнпур выльăх апачĕн хисепĕнче утă, районĕпе илсен, 10 процент пулнă, çав вăхăтрах «Гвардия» колхозăн вăл пачах пулман.

Утă тухăçлăхне ÿстерес тесен, улăхçарансене лайăхлатмалла. «Партизан» колхоз опытĕнчен çакă паллă: çаран çине аммиаклă селитра кăна кăларсан та утă тухăçлăхĕ кашни гектартан 7-шер центнер ытларах тухать. Улăх-çарансенче агротехникăллă пур ĕçсене те тусан, халиччен хинчен сахалтан та виçĕ хут ытларах утă пухса кĕртме пулать.

Выльăх апачĕ валли каякан культурăсен тухăçлăхне ÿстерес тесе, 1952 çулта мĕнпур агротехникăллă ĕçсене тимлĕ туса ирттерме хатĕрленмелле, уйрăмах улăхçарансене, кĕтÿ çÿретмелли вырăнсене лайăхлатма тăрăшмалла. Çарансемпе кĕтÿ çÿретмелли вырăнсене çуркунне иртерех çÿрелесе тухмалла, вырăнти тата минераллă удобренисем кăлармалла. Курăк начар çитĕнекен çарансене сухаласа пăрахса пăрça йышши курăксене пучахлă курăксемпе хутăштарса акса хăвармалла.

Районти колхозсен фермăсенчи ĕçсене механизацилеме лайăх майсем пур. Алманчри гидроэлектростанцие хута ярсан, татах 17 колхозра электроэнерги пулать. Хăшпĕр колхозсенче электромоторсен вăйĕпе чылай пысăк ĕçсем тăваççĕ. Акă, сăмахран, Димитров ячĕпе тăракан артельте улăм турама икĕ электромотор лартнă. Анчах, калас пулать, электричество вăйĕпе нумай колхозсем кирлĕ пек усă курмаççĕ. Çулла колхозсенче 50 электромотор ĕçленĕ пулсан, халĕ вĕсенчен чылайăшĕ пачах ĕçлемеççĕ. «Победа» колхозăн 4 электромотор. Вĕсен вăйĕпе иртнĕ çул татти-сыпписĕр авăн çапнă, халĕ вара вĕсене вырнаçтарса лартман. Колхозра улăма выльăхсене ним хатĕрлемесĕр ура айне пăрахса параççĕ. Çав вăхăтрах колхоз правленийĕ ăна электричество моторĕн вăйĕпе турама кирли çинчен пачах шутламасть.

МТС руководителĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсен тата колхоз правленийĕсен фермăсенчи ĕçсене механизацилеме пур майсем те йышăнмалла.

Обществăллă хуçалăха ÿстерсе, тĕреклетсе пымалли майсем кашни колхозрах нумай. Вырăнти условисене кура, çав майсене пĕтĕмпех палăртма тăрăшмалла.

Халĕ колхозсенче иртнĕ ялхуçалăх çулĕн итогĕсене пăхса тухаççĕ, 1952 çулта çĕнĕ çитĕнÿсем тума кирлĕ майсем палăртаççĕ. Çав ĕçе колхозниксен анлă массине хутшăнтармалла. Отчетпа суйлав пухăвĕсенче паракан сĕнÿсене тĕплĕ шута илни кирлĕ, вĕсене пурнăçлассишĕн мĕнпур тимлĕхпе кĕрешмелле. Кăçалхи производство планĕсене тунă чухне колхозсен пирĕн республика ялхуçалăхĕ умне партипе правительство кăларса тăратнă задачăсене асра тытас пулать. Колхозниксен хастарлăхне çав ответлă задачăсене—ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне чылай ÿстерес задачăсене чыслă пурнăçлама мобилизацилемелле.

Р. АРХИПОВ,

Красноармейски районĕнчи ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ.

Ачасене—ҫирӗп пӗлӳ

(Шупашкар хулинчи учительсен канашлӑвӗнчен)

Ҫак кунсенче Шупашкар хулинчи учительсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу 1951—1952 вӗренӳ ҫулӗн малтанхи ҫур ҫулӗнче тунӑ ӗҫсен итогӗсем ҫинчен тата шкулсенчи пионер организацийӗн ӗҫне ӳйлатасси ҫинчен сӳтсе яврӗ.

Канашлу активлӑ иртрӗ. Прениҫе пурӗ 26 ҫын тухса каларӗ. Докладчиксем те, прениҫе тухса калакансем те хулари шкулсем кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗн малтанхи ҫур ҫулӗнче чылай пысӑк ҫитӗнӳсем тунине палӑртрӗҫ.

Хулара пурне те обязательнӑй йӗркепе ҫичӗ ҫул вӗрентес тӗлӗшпе йышӑннӑ закон ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланса пырать. Пӗлтӗр хулара икӗ вӑтам шкул ҫӗнӗрен уҫӑнӑ. Тӑлӑх ачасене пулӑшма 15.186 тенкӗлӗх всеобуч фончӗ тунӑ. Атӑл леш енчи ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкула ачасем 10—15 километр таран инҫетрен ҫӳреҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ку шкул ҫумӗнче 30 ача вырнаҫмалӑх интернат тунӑ. Унта ачасене пурӑнма лайӑх условисем туса панӑ.

Лайӑх вӗрентекен учительсен хисепӗ ҫултан-ҫул ӳсет. Шкулсенче вӗренӳ ҫулӗн малтанхи ҫур ҫулне 25 класра ӑнӑҫлӑ вӗҫленӗ.

Уйрӑмах 1-мӗш вӑтам шкул коллективӗ лайӑх ӗҫленине палӑртмалла. Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче кунта ӗлкӗрсе пырайман ачасем 151 пулнӑ пулсан, кӑҫал 59 ача кӑна шутланать. 5-мӗш классенче ӗлкӗрсе пырайман ачасем пачах та ҫук. Ҫавӑн пекех 5-мӗш вӑтам шкул коллективӗ те начар мар ӗҫлет.

1-мӗш шкулти учительницӑсем—Александровӑпа Матвеева юлташсем, 4-мӗш шкулти учительница Терентьева юлташ, 22-мӗш шкулти учительница Нимакова юлташ вырӑс чӗлхине вӗрентес ӗҫре паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ.

Анчах чылай шкулсенче вырӑс чӗлхине вӗрентес ӗҫе начар йӗркеленӗ. Ку предметпа ӗлкӗрсе пырайманнисен хисепӗ чылай шкулсенче пысӑк пулни учительсем, Сталин юлташ чӗлхе ыйтӑвӗсем тӑрӑх вӗрентнине тӗп никӗсе хурса, вӗрентӳ ӗҫне ҫӗнӗлле йӗркелесе ҫитерменни ҫинчен калать. 6-мӗш вӑтам шкулти учительница Федотова юлташ вырӑс чӗлхипе вуламалли урoксенче вӑхӑта каласса, вырӑсларан чӑвашла тата чӑвашларан вырӑсла куҫарса вӑхӑта нумай ирттерет.

11-мӗш вӑтам шкулти учительница Бородина юлташ вырӑс чӗлхипе ирттерекен урoксенче пуринчен ытларах теорие—грамматика правилисене вӗрентме тӑрӑшать, ҫав вӑхӑтрах практикӑллӑ ӗҫсене манӑҫа хӑварать.

17-мӗш шкулти учительница Кожакова юлташ ачасене тарӑн та ҫирӗп пӗлӳ пама тӑрӑшать. Унӑн класӗнче вырӑс чӗлхипе пурте лайӑх ӗлкӗрсе пыраҫҫӗ.

12-мӗш шкулти учительница Севастьянова юлташ программа материалӗсене, вӗрентӳ ӗҫӗн методикине лайӑх пӗлсе ҫитнӗ, вӑл урoксене тӗплӗн хатӗрленсе ирттерет, вӗрентӳре наглядлӑй пособисемпе анлӑ усӑ курать. Вӑл вӗрентекен ачасенчен нумайӑшӗ вырӑс чӗлхипе лайӑх паллӑсем илеҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех чылай шкулсенче математикӑна вӗрентес ӗҫе те кирлӗ пек йӗркелемен. Сӑмахран, Попов юлташ (19-мӗш шкул), Шаронова юлташ (21-мӗш шкул), Тимофеев юлташ (11-мӗш шкул) тата ытти учительсем те математикӑпа ҫирӗп пӗлӳ параймаҫҫӗ. Вӗсен класӗсенче вӗренӳре ӗлкӗрсе пырайманнисен шучӗ пысӑк. Хулари шкулсенче вӗренекен ачасенчен математикӑпа 457 ача ӗлкӗрсе пыраймасть.

Биологие вӗрентес ӗҫре те чылай ҫитменлӗхсем пур. 11-мӗш шкулта биологие вӗрентес ӗҫе практикӑллӑ ӗҫпе, пурнӑҫпа ҫыхӑнтармаҫҫӗ. Биологи кабинетне кирлӗ оборудованипе пуянлатман, ӳсентӑрансен кӗтессӗ туман. Урoксенче наглядлӑй пособисемпе ҫителӗксӗр усӑ кураҫҫӗ. Ӳсентӑрансен тата выльӑх-чӗрлӗхсемпе кайӑк-кӗшӗксен пурнӑҫне сӑнаса пыма ачасене киле заданисем парса ямаҫҫӗ. Наглядлӑй пособисем тӑвас ӗҫе учительсем ачасене хӑйсене сахал хутшӑнтараҫҫӗ.

Ҫакӑн пек ҫитменлӗхсем ытти шкулсенче те палӑраҫҫӗ.

Хулари чылай шкулсенче СССР Конституцийӗпе историне вӗрентес ӗҫ тивӗҫлӗ вырӑнта тӑмасть. Ҫак ӗҫре учительсем карттӑсемпе, илемлӗ литературӑпа, кинофильмсемпе ҫителӗклӗ усӑ курмаҫҫӗ.

Географие вӗрентес ӗҫӗн итогӗсем пачах савӑнтарма пултараймаҫҫӗ. Хӑшпӗр шкулсенче вӗренекен ачасем карттӑна начар пӗлеҫҫӗ.

Вӗренӳ ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсем класс руководителӗсем тивӗҫлӗ ӗҫлемен пирки те пулаҫҫӗ. Класс руководителӗсем, уйрӑм учительсем шкул ачисем хушшинчи ӑнлануллӑ дисциплинӑшӑн ҫителӗксӗр кӗрешеҫҫӗ, воспитани ӗҫне кирлӗ пек йӗркелеме тӑрӑшмаҫҫӗ.

Прениҫе тухса калакансем хулари сутӗҫ пайӗн ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене палӑртрӗҫ. Сутӗҫ пайӗн работникӗсем шкулсенче сахал пулаҫҫӗ, учительсен ӗҫне тимлӗн тишкермеҫҫӗ. уйрӑм шкулсен вӗренӳ ӗҫӗн результачӗсене тишкерсе хакламаҫҫӗ.

Канашлу шкулсен ӗҫӗнчи палӑртнӑ ҫитменлӗхсене ҫитес вӑхӑтра татӑклӑнах пӗтерме, вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗн пахалӑхне хӑпартса пыма тивӗҫлӗ майсем кӑтартса пачӗ.

Социализмлӑ ӑмӑртӑва ертсе пырассине лайӑхлатмалла

(„Комбайндеталь" заводри профсоюз членӗсен пухӑвӗнчен)

Нумай пулмасть Сӗмӗрлери «Комбайндеталь» заводра профсоюз организацийӗн отчетпа суйлав пухӑвӗ пулса иртрӗ.

— 1951 ҫулта,—терӗ хӑйӗн докладӗнче завком председателе Мотов юлташ,—правительство пирӗн завод коллективне ҫӗнӗ йышши, халиччен кӑларман сельхозмашина продукци туса кӑларма задани пачӗ. Ҫав ответлӑ задание пурнӑҫланӑ чухне стахановецсем, инженерсемпе техниксем хӑйсен пуҫарулӑхӗсене пултарулӑхне ҫӗнӗрен кӑтартрӗҫ. Коллектива коммунистсем хавхалантарса ертсе пыраҫҫӗ, вӗсем ҫӗнӗ техникӑпа усӑ курма, малта пыракан опыта сарма, технологи процесне ҫӗнӗлле йӗркелеме пулӑшаҫҫӗ. Программа пысӑкланнӑ май завод коллективӗ ӳснӗ, ҫӗнӗ рабочисем чылай илнӗ. Ҫӗнӗ рабочисене техникӑна вӗренме, ӗҫе хӑнӑхма стахановецсем нумай пулӑшаҫҫӗ. Заводра вуншар слесарь, токарь, столяр, электромонтажник, жестянщик вӗрентсе хатӗрленӗ. Вӗсенчен ҫурри—хӗрарӑмсем. Кадрсене вӗрентес тӗлӗшпе уйрӑмах стахановец-коммунистсем А. Ленский, Т. Пугачев, В. Елфутин юлташсем паха тӗслӗхсем кӑтартнине палӑртас пулать. Вӗсем кашниех вуншар рабочи вӗрентнӗ.

Социализмлӑ ӑмӑрту, большевикла воспитани парас ӗҫе йӗркелени, стахановецсем юлташла пулӑшни ҫамрӑк рабочисене ӗҫе хӑвӑрт хӑнӑхса ҫитме пулӑшрӗ. Чылай ҫамрӑк рабочисем, сӑмахран, Канягин жестянщик, Иванова маляр тата ыттисем те стахановла ӗҫлеҫҫӗ, ӗҫ нормине куллен 200 процент е ытларах та тултарса пыраҫҫӗ.

Дирекципе завком тунӑ коллективлӑ договора пурнӑҫласа, заводра рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пурнӑҫпа йӑла тата культура условийӗсене чылай лайӑхлатнӑ. 1951 ҫулта завод коллективӗнчен 12 ҫын курорта, 24 ҫын канмалли ҫурта кайса килнӗ, рабочисемпе служащисен 75 ачи пионер лагерӗсенче каннӑ. Социальнӑй страховани кассинчен тата директор фондӗнчен инвалидсене, ача амӑшӗсене тата ыттисене те 300 пин тенке яхӑн парса пулӑшнӑ. Иртнӗ ҫулта стадион тума 100 пин тенкӗ укҫа панӑ. Завод дирекцийӗ чылай рабочисене хӑйсем валли пурӑнмалли ҫуртсем лартма пӗрене, хӑма парса пулӑшнӑ.

Рабочисемпе служащисен политикӑллӑ тата культурӑллӑ шайӗ пӗрмай ӳссе пынине ҫак тӗслӗхсенчен курма пулать: кашни ҫемье хаҫат е журнал ҫырӑнса илет, ҫав вӑхӑтрах нумайӑшӗ библиотекӑран илемлӗ тата политикӑллӑ литература илсе вулаҫҫӗ, кино, спектакль, концерт тӑтӑшах кураҫҫӗ. Кашни хваттере радио, электричество кӗртнӗ. Заводра ӗҫлекен кашни икӗ работникран пӗри е каҫхи вӑтам шкулта, е техникумпа аслӑ шкулта заочно, е техникӑна вӗренмелли кружокра вӗренет.

Ҫакӑн пек ҫитӗнӳсем тунӑ профсоюз организацийӗ. Анчах завком ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем те пулнӑ.

Прениҫе тухса калакансем завкома тата унӑн председательне Мотов юлташа социализмла ӑмӑртӑва аталантарма кирлӗ пек тӑрӑшманшӑн, ӗҫе кивӗ меслетпе туса пынӑшӑн, завод техника тӗлӗшӗнчен хӑвӑрт улшӑнса пынине шута илменшӗн, профсоюз активӗ ҫине таянса ӗҫлеменшӗн хытӑ критикӑларӗҫ.

— Завком тата мастерсем ҫӗнӗ ӗҫ меслечӗсене, паха пуҫарусене пурнӑҫа мӗнле кӗртнипе сахал интересленеҫҫӗ. Эпӗ производствӑра пулакан каяшсемпе усӑ курмалли ҫӗнӳ патӑм. Ҫав ҫӗнӗве пирӗн бригадӑра пурнӑҫа кӗртрӗҫ, ытти бригадӑсем ун ҫинчен пӗлмеҫҫӗ,—терӗ И. Калягин жестянщик.

Столяр Алексей Мотов юлташ завкомпа цехкомсене стахановецсен ӗҫ меслетне, вӗсен опытне цехсенчи тата заводри стена хаҫатӗнче ҫителӗксӗр сутатнӑшӑн критикӑларӗ. Т. Пугачев юлташ ертсе пыракан бригада, Сталинла преми лауреачӗ Ковалев инженер опычӗпе усӑ курса, ӗҫ тухӑҫлӑхне 30 процент ӳстернӗ. Завкомпа цехкомсем ҫак паха пуҫарӑва пӗтӗҫтермен. Производствӑллӑ канашлусем ҫителӗксӗр пулаҫҫӗ. Социализмлӑ ӑмӑртура кам мӗнле ҫитӗнӳ туни, кам юлса пыни, йышӑннӑ обязательствӑна кам мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен коллектива тӑтӑшах пӗлтерсе тӑрас ӗҫе, наглядлӑй агитацие кирлӗ пек йӗркелемен.

Прениҫе тухса каланӑ юлташсем социализмлӑ ӑмӑртӑва ертсе пырас ӗҫри формализма пӗтерме, коллективӑн пуҫарулӑхӗпе пултарулӑхне вӑйлатма, умра тӑракан задачӑсене чыслӑ пурнӑҫлама пулӑшакан паха сӗнӳсем пачӗҫ.

Т. ЕРОПЛАН.

Ҫулталӑкра 3.818 лекци вуланӑ

Пӗтӗм Союзри наукӑллӑ тата политикӑллӑ пӗлӳсем сарас тӗлӗшпе ӗҫлекен обществӑн Чӑваш республикинчи уйрӑмӗ иртнӗ ҫулта колхозсемпе предприятисенче, МТС-семпе артельсенче тата учрежденисенче лекцисем вулассине лайӑх йӗркеленӗ. Ҫак обществӑн членӗсем пӗлтӗр пурӗ 3.818 лекци вуланӑ, вӗсене 334 пин ҫын итленӗ.

Хамӑр республика тӑрӑх

★

Малта пыракансен меслечӗпе

Улатӑрти пӑравуссем юсакан заводри чылай рабочисемпе работницӑсем производствӑра малта пыракансен ӗҫ опычӗпе анлӑ усӑ курса, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн, продукци пахалӑхне лайӑхлатассишӗн ырми-канми кӗрешеҫҫӗ. Заводри паллӑ стахановец-мастерсем Ф. С. Степашкин, М. А. Ерастов тата ыттисем те сменӑри нормӑна икшер хут ирттерсе тултараҫҫӗ, чи лайӑх продукци кӑна туса кӑлараҫҫӗ. Заводра 27 бригадӑна чи лайӑх продукци туса кӑларакан бригада ятне, 13 стахановеца—професси енӗпе чи лайӑх рабочи ятне панӑ.

Стахановла ӗҫре кулленех пултаруллӑ ҫынсем палӑрса пыраҫҫӗ. Кашни ӗҫ кунӗ ҫӗнӗ те пысӑк ӳсӗмсем тунипе паллӑ пулса тӑрать. Ҫак кунсенче механически цехри Талызинская, Скворцов, Уланова, Горбатов токарьсем, тимӗрҫӗсен цехӗнче Сидоров, Рысин тимӗрҫӗсем, мӑлатукпа ҫапакан—Трифонов, Егоров, Блинов юлташсем, Понявин, Белоусова, Казаков прессовщиксем А. Жандаровӑпа О. Агафонова юлташсен меслечӗпе ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Вӗсем кашни операцие пысӑк пахалӑхпа туса, чи лайӑх продукци кӑна туса кӑларассишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Производствӑри кашни операцие чи лайӑх тӑвассишӗн пуҫарнӑ социализмлӑ ӑмӑрту кӗске вӑхӑтрах хӑйӗн паха результачӗсене кӑтартрӗ. Талызинская токарь малтан сменӑри ӗҫ нормине 100 процентран ытла тултарайман пулсан, халӗ яланах норма ҫурӑ е ытларах та пурнӑҫласа пырать.

Скворцовпа Уланова токарьсен те ӗҫ тухӑҫлӑхӗ 20—25 процент ӳснӗ. Горбатов токарь куллен икшер норма туса пыракан пулчӗ.

Производство новаторӗсен ҫӗнӗ ӗҫ меслечӗсене рабочисемпе работницӑсем хушшинче анлӑ сарас тесе пӳр майсемпе усӑ кураҫҫӗ. Цехсемпе бригадӑсенче каласусем пулса иртеҫҫӗ, ҫӗнӗ ӗҫ меслечӗсем ҫинчен заводри техника советӗнче, профсоюз членӗсен пухӑвӗсенче докладсем итлеҫҫӗ.

А. СМИРНОВ.

Кружоксем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ

ПЕНРЕҪ. Хурамалти вӑтам шкул коридорӗпе иртсе пынӑ чухне стенасем ҫинче ҫакӑнса тӑракан экспонатсене пӑхмасӑр иртсе кайма ҫук. Кунта—«Ҫамрӑк художниксен» кружокӗн членӗсем тунӑ произведенисен выставки. Выставкӑра 150 ытла экспонат. Унта ҫӗнӗ ҫул ячӗпе саламлакан ӳкерчӗксем, пейзажсем, декораци эскизӗсем, 7—10-мӗш классенче вӗренекенсем тунӑ чертежсем, орнаментсем нумай. Выставкӑра Чӑрӑшкассинчи шкулта вӗренекенсен ӗҫӗсене те курма пулать.

Шкулти радиокружокра 23 ҫамрӑк тӑрать. Кружок членӗсем теорине паллашнӑ. Иртнӗ уйӑхра Хурамал шкулӗнче радио енӗпе мала тухас тӗлӗшпе конкурс пуласси ҫинчен пӗлтерчӗҫ. Каникул вӑхӑтӗнче вӗсем тӗрлӗ приемниксем туса хӑйсен ӑсталӑхне ӳстереҫҫӗ, кружок ӗҫне татах та аванлатма тӑрӑшаҫҫӗ.

Вӗренекенсем чылайӑшӗ лампӑллӑ приемниксем тӑваҫҫӗ. Д. Данилов кӗске хумлӑ приемник тума тытӑннӑ, хӑшӗсем усилительсем, детекторлӑ приемниксем тӑваҫҫӗ.

Кружок членӗсем яла радиофикацилесе ҫитерессишӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

В. ЕРМОЛАЕВ.

Партипе правительство ачасемпе ача амӑшӗсен сывлӑхне сыхлассишӗн кулен тӑрӑшаҫҫӗ. Консультаци пункчӗсемпе сывлӑх учрежденийӗсем ачасене сывӑ пӑхса ӳстерме пулӑшаҫҫӗ. ӲКЕРЧӖК ҪИНЧӖ: Шупашкарти 2-мӗш консультаци пунктӗнче. Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденлӗ заводра ӗҫлекен А. Н. Нефедова ача сывлӑхне пӑхтарма пынӑ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчӗкӗ

Самолет чирлӗ ҫын патне вӗҫрӗ

Шупашкарти поликлиникӑн пӗр пӳлӗмӗнче Чӑваш республикин картти ҫакӑнса тӑрать. Карттӑ ҫинче Шупашкарпа район центрӗсене тата республикӑри больницӑсене хӗрлӗ чернилпа паллӑ туса пӗрлештернӗ. кашни район центрне тата больницӑна ҫитме миҫе километр пулнине кӑтартса паллӑ тунӑ. Ҫакӑнта, пӗчӗк сӗтел умӗнче, шурӑ халат тӑхӑннӑ сестрана яланах курма пулать Кунта республикӑри санавиастанци вырнаҫнӑ.

Пӳлӗме телеграммӑсем илсе ҫӳрекен хӗр васкаса пырса кӗрет.

— Телеграмма килнӗ,—тет вӑл «молния» тесе ҫырнӑ хут тыттарса.

«Васкавлӑ пулӑшу кирлӗ. Хирург ярӑр» пӗлтерет телеграмма.

Дежурнӑй сестра сехет ҫине пӑхса илет. Вӑхӑт чылай. тепӗр сехетрен тӗттӗм пулать. Телеграммӑна Шӑмӑршӑ районӗнчи Пӑчӑрлӑ Пашъел ялӗнчи больницӑран янӑ. Карттӑ ҫинче паллӑ тунӑ тӑрӑх, унта ҫитме 155 километр.

Ҫав вӑхӑтра Пӑчӑрлӑ Пашъелӗнчи больницӑра И. Ильичев колхозник пичӗ йывӑр чирпе выртнӑ. Ӑна васкавлӑ операци тумалла пулчӑ. Ҫавӑн пек операци тума пысӑк опытлӑ хирург кирлӗ пулнӑ.

Дежурнӑй бортсестра В. Стожарова юлташ ҫакӑн ҫинчен В. Гурьева хирурга телефонпа пӗлтерет. Темиҫе минутран автомашина хирургпа бортсестрана аэродрома илсе ҫитерет. Самолет хатӗр. Вӗсем самантрах сывлӑша вӗҫсе хӑпараҫҫӗ. Самолет чирлӗ ҫын патне васкавлӑ пулӑшу пама вӗҫет. Хирург вӑхӑтра ҫитсе операци тӑвать, чирлӗ ҫынна вилӗмрен ҫӑлса хӑварать.

Республикӑри санавиастанци ӗҫӗнче ҫакӑн пек тӗслӗхсем кулленех пулаҫҫӗ. Самолет вӗҫмен кун сахал пулать.

Шупашкарти пысӑк опытлӑ врачсем ялсене кайса чирлӗ ҫынсене сыватасси йӑлана кӗчӗ. Пӗлтӗр санавиастанци самолечӗсем 900 хут ытла ялсене вӗҫсе кайса, пиншер ҫынна йывӑр чиртен сывалма пулӑшнӑ.

Санавиастанци врачӗсем чирлӗ ҫынсене операци тума кӑна мар, юн яма, консультаци пама, лекцисемпе докладсем ирттерме те чылай хутчен кайса килнӗ. Ҫапла, Сӗнтӗрти больницӑра Н. Чекушкин врач чирлӗ ҫынна операци тума хатӗрленнӗ. Операци тунӑ чухне чирлӗ ҫыннӑн юн нумай каясси паллӑ пулнӑ. Врач Шупашкартан самолетпа юн ярса пама ыйтнӑ.

Шӑп операци вӗҫленнӗ тӗле кирлӗ чухлӗ юн илсе пырса пани ҫынна ҫӑлса хӑварма, лайӑх сывалма пулӑшнӑ.

Санавиастанцин хӑйӗн темиҫе самолет пур. Унта Отечественнӑй вӑрҫӑра летчик пулнӑ, самолетпа вӗҫес ӗҫре пысӑк опыт туяннӑ летчиксем С. Воробьев, Н. Агафонов, И. Чуркин юлташсем ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ паттӑр ҫапӑҫнӑ летчиксем. Халӗ, мирлӗ ӗҫре хастарлӑ ӗҫлеҫҫӗ. Самолета чирлӗ ҫын патне хӑвӑртрах ҫитерсе тивӗҫлӗ пулӑшу пама тӑрӑшаҫҫӗ.

Санавиастанци самолечӗпе республикӑри больницӑсемпе колхозсене чи опытлӑ, паллӑ врачсем каяҫҫӗ. Иртнӗ ҫулхине республикӑн главнӑй хирургӗ И. М. Кузнецов, медицина наукисен кандидачӗ, республикӑн главнӑй терапевчӗ П. Н. Осипов, невропатолог Л. Н. Сыркина, хирург В. Николаев, хирург-травматолог Н. П. Николаев, гинеколог Т. П. Ермошкина тата ыттисем те вуншар хутчен кайса килнӗ.

Станцире бортсестра пулса ӗҫлекен В. А. Стожарова юлташа республикӑри больницӑсенче ӗҫлекенсенчен пӗлмен ҫын ҫук та пулӗ. 1946 ҫултанпа ӗҫлесе, вӑл республикӑри ялсене пин хут ытла вӗҫсе кайнӑ, ҫӗршер ҫынна сыватма пулӑшнӑ. Ахальтен мар ун патне, санавиастанци ячӗпе час-часах ҫырусем килсе тӑраҫҫӗ. Самолетпа пырса сыватнӑ ҫынсем хӑйсене вӑхӑтра пулӑшу панӑшӑн, сыватнӑшӑн чӗререн тав туса ҫыраҫҫӗ.

— Сынӑшӑн, халӑх сывлӑхӗшӗн ҫакӑн пек тӑрӑшни пирӗн ҫӗршывра кӑна пулма пултарать. Ҫакӑншӑн эпир чи малтан хамӑрӑн юратнӑ партипе правительствӑна, аслӑ Сталина чӗререн тав тӑватпӑр,—тесе ҫыраҫҫӗ вӗсем хӑйсен ҫырӑвӗсенче.

Н. МИНИН.

★

Корреспондентсен районти канашлӑвӗ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Ҫак кунсенче корреспондентсен районти канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Ф. Дмитриев юлташ «ВКП(б) обкомӗн VIII-мӗш пленумӗ йышӑннӑ решенирен корреспондентсем умне тухса тӑракан задачӑсем ҫинчен» тунӑ доклада итлесе сӳтсе яврӗ.

Прениҫе 11 ҫын тухса каларӗ. Вӗсем республикӑра тата районта тухакан хаҫатсен ӗҫне лайӑхлатма лайӑх сӗнӳсем пачӗҫ.

Ленин ячӗпе тӑракан колхозри «Большевик» стена хаҫачӗн редакторӗ А. Петров юлташ хӑйӗн ӗҫ опычӗпе паллаштарчӗ.

— Пирӗн хаҫат, — терӗ вӑл,—яланах вӑхӑтра тухать. Хаҫат кӑларас ӗҫе 55 колхозник хутшӑнса ӗҫлет. Стена хаҫачӗ кӑлармалли плансене партин уҫӑ пухӑвӗсенче сӳтсе яватпӑр, редколлеги ӗҫӗ ҫинчен отчетсем туса паратпӑр. Анчах республикӑри хаҫатсемпе районти хаҫат пире, стена хаҫатӗнче ӗҫлекенсене, сахал пулӑшаҫҫӗ.

— Пирӗн районти хаҫат, ҫавӑн пекех республикӑри хаҫатсем те, финанс ӗҫне лайӑхлатмалли майсене уҫса палӑртакан статьясем пичетлемеҫҫӗ, сводкӑсем пичетленипех ӑпӑланаҫҫӗ,—терӗ районти финанс пайӗн заведующийӗ Г. Яркин юлташ.

Районти культурӑпа сутӗҫ учрежденийӗсен пайӗн заведующийӗ И. Патмар юлташ хаҫатсене халӑх творчестви ыйтӑвӗсене ҫителӗксӗр сутатнӑшӑн критикӑларӗ.

«Родина» колхоз членӗ С. Алексеев юлташ колхозри пуҫламӑш парторганизаци стена хаҫатне ертсе пыманни ҫинчен, Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз членӗ А. Леонтьев юлташ—районти хаҫатра физкультурӑпа спорт ӗҫӗ ҫинчен ҫутатманни ҫинчен каларӗҫ.

— Пирӗн районта,—терӗ Л. Семенов пропагандист,—лайӑх ӗҫлекен политшкулсемпе кружоксем чылай. Анчах парти вӗренӗвӗнчи лайӑх опытсене районти хаҫат страницисенче курма ҫук, унта пропагандистсен статьисене пичетлемеҫҫӗ.

Тухса калакансем районти «Коммунизм ҫулӗпе» хаҫат районти промышленность юлса пынине, колхозсем вӑрман хатӗрлевӗнче юлса пынине пӗтерессишӗн ҫителӗксӗр кӗрешнине палӑртрӗҫ.

Н. ОРЛОВ.

Шкул ачисен ашшӗ-амӑшӗсемпе ҫирӗп ҫыхӑну тытаҫҫӗ

ЕЛЧӖК. Лаш Таяпари вӑтам шкулта 500 ытла ҫамрӑк вӗренет. Учительсем кашни вӗренекене ҫирӗп пӗлӳ парас тесе тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсене ку ӗҫре ачасен ашшӗ-амӑшӗсемпе куллен ҫыхӑну тытни нумай пулӑшать.

Учительсем кашни яла кайса вӗренекенсен ашшӗ-амӑшӗсен пухӑвӗсене ирттереҫҫӗ, ачисен вӗренӳри ӳсӗмӗсемпе паллаштараҫҫӗ.

Пухусенче коммунизмӑн аслӑ стройкисем, тӗнчери лару-тӑру ҫинчен, ачасене пӑхса ӳстересси, тӗрӗс воспитани парасси ҫинчен каласусем, лекцисемпе докладсем ирттереҫҫӗ. Ачасен ашшӗ-амӑшӗсем учительсене хӑйсемпе ҫирӗп ҫыхӑну тытнӑшӑн тав тӑваҫҫӗ.

П. ЮТКИН.

Театр

„Ялта" драма сцена ҫинче

Декабрӗн юлашки кунӗсенче Чӑвашсен академи театрӗ «Ялта» драмӑн 560-мӗш спектакльне кӑтартрӗ. Ку спектакле нумай кӑтартнӑ пулни те, ӑна курма ҫынсем халӗ те йышлӑн ҫӳреҫҫӗ. Кӑҫалхи сезонра театр ку драмӑна Ф. П. Павловӑн тӗп варианчӗ тӑрӑх кӑтартса пачӗ.

«Ялта» пьеса чӑвашсен прогрессивлӑ идейӑллӑ классикӑллӑ драматурги произведенийӗсенчен пӗри пулса тӑрать. Вӑл революциччен пусмӑрта пурӑннӑ чӑвашсен ҫутӑ ӗмӗчӗсемпе туйӑмӗсене кӑтартса парать.

Пирӗн социализмлӑ совет искусстви прогрессивлӑ классиксен пысӑк опычӗпе усӑ курса, коммунизм идейипе ҫӗнелнӗ, кунтан-кун чечекленсе пыракан искусство. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ идеологи ыйтӑвӗсем тӑрӑх йышӑннӑ историллӗ решенисенче ҫакна кӑтартса панӑ: совет искусствинче паянхи совет ҫыннисен паттӑрла ӗҫне анлӑрах кӑтартса панипе пӗрлех, прогрессивлӑ классиксен произведенийӗсене тивӗҫлӗ вырӑн памалла, вӗсенчен вӗренсе пымалла, тенӗ. Ҫак кӑтартусене асра тытса, социализмлӑ совет искусстви работникӗсем юлашки ҫулсенче чылай пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. Чӑваш театрӗн коллективӗ те, паянхи совет ҫыннисен пурнӑҫне кӑтартакан спектакльсем лартнипе пӗрлех, вырӑс классикӗсен произведенийӗсене чылай лартса пачӗ.

«Ялта» драмӑна Ф. П. Павлов 1922 ҫулта ҫырнӑ. Автор пире 1914 ҫулхи империализм вӑрҫи вӑхӑтӗнчи чӑваш ялӗнчи хресченсен пурнӑҫне пысӑк ӑсталӑхпа кӑтартса парать. Ку драмӑна режиссер Г. В. Парне 1932 ҫулта ҫӗнетсе лартма тӑрӑшнӑ, вӑл пьесӑна ҫӗнӗлле вариантпа пичетлесе кӑларнӑ. Ҫапах та паянхи кунта ҫак драмӑна ялсенчи драмкружоксенче лартма тытӑнсан, хӑшпӗр вырӑнсемпе килӗшменнине пула, лартмасӑр тытӑнса тӑраҫҫӗ, пьеса ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарса пама театра тӗрлӗрен ҫырусем ҫыраҫҫӗ. Ку вӑл пирӗн совет ҫыннисен идейӑллӑ шайӗне культури ҫитӗнсе пынине, вӗсем художествӑллӑ произведенисем ҫине тарӑнӑн пӑхма тӑрӑшнине кӑтартать.

«Ялта» драмӑри ӗҫсем 1914—1916 ҫулсенче, империализм вӑрҫи вӑхӑтӗнче пулса иртеҫҫӗ. Ку вӑхӑтра хуласемпе ялсенче класлӑ кӗрешӳ кунтан-кун ҫивӗчленсе пынӑ. Пусмӑрти халӑхсене хумхантарнӑ тӗп ыйту вӑл вӑрҫа чарса лартасси, пусмӑрлӑх тӗнчине аркатса ирӗке тухасси, ҫӑкӑршӑн, ҫӗршӗн, ирӗклӗхшӗн кӗрешесси пулнӑ. «Ялта» драма ҫак ыйтусене ҫителӗклӗ таран татса параймасть пулсан та, вӑл вӑхӑтри чӑваш ялӗнчи пурнӑҫа пӗр енчен питӗ ӗненмелле кӑтартса парать. Вӑрҫӑ хресченсен пурнӑҫне юхӑнтарса янине, пуянсем вӑрҫӑ хӳттипе пуйса, ашкӑнса пурӑннине куратпӑр. Драмӑри тӗп герой Ванюк образӗнче паха енсем нумай палӑраҫҫӗ. Вӑл пуянсене курайманни, вӗсене хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫма хатӗр пулни, вӑл тӳрӗ кӑмӑллӑ ҫын пулни, хӑйӗн Елюкне таса чӗрепе хӗрӳллӗ юратни тата ытти те,—ҫаксем вӗсем пурте ҫав вӑхӑтри ялти ҫамрӑксемшӗн прогрессивлӑ енсем пулнӑ. Ҫавӑнпа та Ванюк образне куракансем хытӑ кӑмӑллаҫҫӗ.

Драмӑри тепӗр паха, прогрессивлӑ образ вӑл—Елюк образӗ. Ку образа автор драма вӗҫне ҫитиччен прогрессивлӑ паха туйӑмсемпе парнеленӗ. Елюк пуян килӗре ҫитӗннӗ пулин те тӑван мар амӑшӗ пусмӑрланине хирӗҫ тӑма хастарлӑх ҫитерни, тӳрӗ, ырӑ кӑмӑллӑ, ӑслӑ-тӑнлӑ чухӑн ачана—Ванюка чӗререн юратни, ӑна вӑрҫӑран таврӑнасса чунтан кӗтсе пурӑнни, асамҫӑ карчӑк Пӑскар пусмӑрне тӳссе пурӑниччен завода ӗҫлеме кайма ӗмӗтленни,—ҫаксем пурте вӑл вӑхӑтри ялти чӑваш хӗрӗшӗн чӑн-чӑн паттӑрла ӗҫсем пулаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та спектакль куракансем пурте Елюка хытӑ хисеплеҫҫӗ.

Ф. П. Павлов прогрессивлӑ, талантлӑ писатель. Вӑл хӑйӗн творчествинче реализм ҫулӗпе пынӑ. Ҫав вӑхӑтрах хӑшпӗр ҫӗрте «натурализм» йӗрӗсем палӑраҫҫӗ. Искусствӑри «натурализм» представителӗсем: «лайӑх ҫыннӑн усал енӗсене шыра, усал ҫыннӑн лайӑх енӗсене шыра», текен теорие пӑхӑнса тӑнӑ. Илер-ха, тӗслӗхрен Ҫтаппан образне. Ҫтаппан образне автор ӑста кӑтартса панӑ: вӑл пуян-куштан, ascӑнчӑк ҫын пулнине куратпӑр. Анчах та автор драма вӗҫӗнче Ҫтаппана ырӑ кӑмӑллӑ ҫын пек кӑтартнӑ. Вӑл Елюка чӗререн юратнипе хӑйӗн мӗнпур пуянлӑхне ҫунтарса ярса, Елюк умне ӳкме хатӗр пулнӑ ҫын пек тухса тӑрать. Вӑл Елюка чӑпах та качча илет. Ванюк Елюка персе пӑрахсан, никам та мар, Ҫтаппан кӑна Елюк умне чӗркуҫленсе ӳкет, Елюка шеллет. Ку вырӑнта автор усал ҫыннӑн та лайӑх енӗ пуррине кӑтартасшӑн. Пирӗн шутпа Ҫтаппан, Елюка хӑй майлӑ юрататъ пулсан та, ӑна ирӗксӗр, пусмӑрласа, хитре ҫамрӑк арӑмпа йӑпанаса пурӑнма ҫеҫ качча илет.

Драмӑри ытти образсене автор паха сӑнласа панӑ. Ҫавӑнпа та вӗсем ҫинчен чарӑнса тӑни кирлех те мар. Драмӑри ҫӳлте асӑннӑ йӑнӑшсене театр коллективӗ ҫӗнӗ постановкӑра тӗрӗс тӳрлетсе кӑтартма тӑрӑшрӗ.

Г. В. Парне редакциленӗ «Ялта» драмӑн иккӗмӗш варианчӗ пирки пӗр-ик сӑмах калама кирлӗ. Классикӑллӑ произведенисем ҫумне хушса ҫырни пачах килӗшӳсӗр ӗҫ пулса тӑрать. Уйрӑммӑнах пьесӑри ҫук шухӑшсене образсем ҫумне ирӗксӗрлесех ҫыпӑҫтарни килӗшӳсӗр япала. Ҫапла тунипе Г. В. Парне «Ялта» драмӑна «формализм» енелле сулӑнтарса янӑ, кӳмепе туй тутарса «символизм» патне илсе пынӑ. Пьесӑра революцилле шухӑшсем ытларах пулччӑр тесе, ялти ӗҫсе супнӑ ҫапкаланчӑк сӗврӗ Муҫҫана пуянсене хирӗҫ активлӑн ҫапӑҫма пултаракан ҫын пек туса кӑтартнӑ. Ҫавӑнпа та кун пек пӑсса юсанӑ вариант сцена ҫинче лартма тивӗҫлӗ мар пулнине шута илсе, халӗ театр ҫав ҫитменлӗхе тӳрлетрӗ.

Пирӗн совет ҫыннисем классикӑллӑ произведенисене юратса вулаҫҫӗ, тивӗҫлипех хаклаҫҫӗ. Чӑваш академи театрӗнче «Ялта» драмӑпа 560 хут лартса кӑтартни чӑваш совет драматургин пысӑк ҫитӗнӗвӗ пулса тӑрать. Коммунистсен партийӗ пире прогрессивлӑ классикӑллӑ искусствӑна упрама, ӑна тивӗҫлӗ вырӑна тӑратма, унпа коммунизмлӑ общество тӑвас ӗҫре анлӑн усӑ курма хушать.

К. ИВАНОВ.

ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

Политика комитетĕнче

ПАРИЖ, январĕн 8-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Политика комитечĕн кăнтăрлахи ларăвĕнче чылай ҫĕршывсен, ҫав шутра Афганистан, Бирма, Аргентина тата Гватемала делегачĕсем тухса каланă. Вĕсем 11 ҫĕршыв тăратнă резолюци проектĕнче тӳрлетме кирлĕ вырăнсем чылай пуррине палăртнă.

Чехословаки делегацин пуҫлăхĕ Секанинова сăмах илнĕ. Вăл 11 ҫĕршыв тăратнă резолюцин тĕллевĕ ООН-ран Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен агрессиллĕ политикин хатĕрĕ туса хурасси пулать, ҫавăнпа та Чехословаки делегацийĕ ку резолюци проектне хирĕҫ сасăлать, тенĕ. Секанинова Чехословаки делегацийĕ Совет Союзĕ тăратнă резолюци проекчĕшĕн сасăлать, тесе каланă.

Совет Союзĕ сĕннĕ резолюци пирки хăй мĕнле позици тытни ҫинчен Польша делегачĕ Вербловский тĕплĕ каласа панă. Вăл совет делегацийĕн сĕнĕвĕ тĕнчери лару-тăрăва лайăхлатма, миршĕн, халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕҫлесе пурăнмалла тăвассишĕн кĕрешме тивĕҫлĕ Пĕрлешнĕ нацисен организацине тĕреклетме май парать, тенĕ.

СССР делегацийĕн пуҫлăхĕ А. Я. Вышинский тухса каланине Политика комитечĕ питĕ тимлĕ итленĕ. Вăл ҫакна кăтартса панă. США, Англи, Франци тата Бразили делегацийĕсем тĕнчери лару-тăрури йывăрлăхсене пĕтерме мĕнле ĕҫсем тăвасси ҫинчен сӳтсе явма Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта пулса пымалли ларăвне пĕр тăхтаса тăмасăр пухассине хирĕҫ тата ҫав ларура чи малтан Корейăри перемири ҫинчен пыракан калаҫусене ăнăҫлă вĕҫлеме мĕнле ĕҫсем тумалли ҫинчен сӳтсе явассине хирĕҫ тухса каларĕҫ. Ҫакăнтан Совет Союзĕн резолюци проектне кĕртме тӳрлетӳ тăратнă авторсем тавлашуллă ыйтусене йĕркелесшĕн мар тата тĕнчери лару-тăрури йывăрлăхсене пĕтересшĕн мар пулни курăнать. Ҫав делегацисен позицийĕ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем тата вĕсем майлисем тĕнчери лару-тăрури хальхи йывăрлăхсене ҫаплипех хăварма тăрăшнине кăтартать.

Делегатсем тухса каланă хыҫҫăн комитет резолюци проекчĕсене тата ҫав проектсене кĕртме сĕннĕ тӳрлетӳсене йышăнас пирки сасăлама тытăннă.

Совет делегацийĕ тăратнă проектăн пĕрремĕш пунктĕнче «коллективлă мерăсем» текенскерсем тĕлĕшпе ĕҫлекен комитета салатса яма сĕннĕ. Ăна йышăнас пулсан, кун хыҫҫăн вара 11 ҫĕршыв тăратнă резолюци проектне сасăлама та кирлĕ маррине шута илсе, совет делегацийĕ сĕннĕ резолюцин пĕрремĕш пунктне чи малтан сасăлама тăратнă.

Дискусси пынă вăхăтра чылай делегацисем 11 ҫĕршыв сĕннĕ резолюци проекчĕпе килĕшменни ҫинчен каларĕҫ пулин те, вĕсем ҫапах та Совет Союзĕн сĕнĕвĕсен ҫак пункчĕшĕн сасăлама хăяйман. Ăна сасăсен ытларахăшĕпе сирсе янă. Резолюци ҫав пункчĕшĕн 5 делегаци (СССР, Польша, Чехословаки, УССР тата БССР) сасăланă. Икĕ делегаци (Индипе Индонези) нихăш майлă та сасăламан.

Унтан 11 ҫĕршыв тăратнă резолюцин ҫĕнĕрен пăхса тухса урăхлатнă проектне сасăланă. Унчченех ҫав урăхлатнă проекта «коллективлă мерăсем» текенскерсем тĕлĕшпе ĕҫлекен комитетăн докладне ырлас марри ҫинчен сырнă тӳрлетӳсене тата ООН членĕнче тăракан ҫĕршывсене асăннă мерăсене пурнăҫлас ĕҫе хутшăнмасăр юлма право паракан тӳрлетӳсене кĕртнĕ. США делегацийĕн планĕсем тĕлĕшĕнчен илсен, ку проекта урăхлатни упăн шухăшне нумай ĕнчĕклетнĕ. Резолюцин урăхлатнă проекчĕ, чăннипе, Америкăн «коллективлă мерăсем йышăнасси» текен планĕ путланса ларнине пĕлтерет. Ку резолюцишĕн 51 делегаци сасăланă. Ăна хирĕҫ 5 делегаци (СССР, УССР, БССР, Польша тата Чехословаки) сасăланă. Виҫĕ делегаци (Инди, Индонези тата Аргентина) ҫав урăхлатнă проекта ырлама килĕшмен, вĕсем нихăш майлă та сасăламан. Вунпĕр ҫĕршыв тăратнă резолюци проекчĕн уйрăм пункчĕсене сасăланă чухне нихăш майлă та сасăламаннисем 3 делегацирен пуҫласа 13 делегаци таран пулнă. Уйрăм пунктсене сасăланă чухне шăпах та тĕрлĕ делегацисем сĕннĕ тӳрлетӳсене кĕртнĕ пунктсем нумайрах сасă илнĕ. Тĕрлĕ делегацисем ҫав тӳрлетӳсене хăйсен ҫĕршывĕсене ирĕксĕрлесех Американ агрессиллĕ планĕсене,— витсе пытарас шутпа ООН йышăннă «коллективлă мерăсем» тесе ят панăскерсене,— пурнăҫлас ĕҫе хутшăнтарма парас мар шутпа сĕннĕ пулнă.

Вунпĕр ҫĕршыв сĕннĕ резолюци проектне йышăннă пулин те, дискуссисен итогĕ Америка шухăшласа кăларнă «коллективлă мерăсем» текенскерсем путланса ларни пулать. Йышăннă резолюци Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене ООН членĕнче тăракан ҫĕршывсене хушса тăма ирĕк памасть, ҫапла вара Пĕрлешӳллĕ Штатсем хăйсен агрессиллĕ вăрҫă планĕсене пурнăҫлас ĕҫре ООН членĕнче тăракан ҫĕршывсене пурлăх тата ҫар парса пулăшмашкăн хушма пултараймаҫҫĕ. Ҫакă вара Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем ку ыйтура пысăк поражени тӳснине пĕлтерет, ООН-ра Пĕрлешӳллĕ Штатсене сахалтарах хисеплĕме пуҫлани тата вĕсен влиянийĕ чакни ҫинчен калать.

ПАРИЖ, январĕн 9-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Паян Политика комитетĕнче «коллективлă мерăсем» текенскерсен комитечĕн доклачĕ тăрăх Совет Союзĕн делегацийĕ тăратнă резолюци проектне сасăланă. Проект ҫинчен малтан ăнлантарса парса сырнă умсăмахра Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн тĕп задачи вăл — тĕнчери мирлĕ пурнăҫа тата хăрушсăрлăха тĕреклетесси пулни, Устав тăрăх тĕнчере мирпе хăрушсăрлăх тăвассишĕн тĕп ответлăха Хăрушсăрлăх Совечĕ ҫине хуни ҫинчен каланă. СССР делегацийĕ, ҫапла тума сĕннĕ: пĕрремĕшĕ—«Коллективлă мерăсем тĕлĕшпе ĕҫлекен комитета» салатса яма, иккĕмĕшĕ—Хăрушсăрлăх Советне хальхи вăхăтра тĕнчери ҫĕршывсем хушшинче пулса тăнă йывăрлăха сирсе ярас тĕлĕшпе мĕнле мерăсем йышăнасси ҫинчен сӳтсе явма хăйĕн вăхăтран вăхăта пулса пымалли ларăвне пĕр тăхтаса тăмасăр пухма тата ларусенче, чи малтан, Корейăра ҫапăҫма чарăнасси ҫинчен пыракан калаҫусене ăнăҫлă вĕҫлеме пулăшмашкăн мĕнле мерăсем йышăнасси ҫинчен пăхса тухма сĕннĕ.

Совет Союзĕн уҫăмлă, ăнланмалла, конкретнăй тата Устав тăрăх ҫырса хатĕрленĕ сĕнĕвĕсем ҫапла. Вĕсене тĕнчери ҫĕршывсем хушшинче пулса тăнă йывăрлăха аслă державăсем пĕр-пĕринпе килĕшӳ тунă тăрăх пĕтерме чăннипех те тăрăшса ҫырса хатĕрленĕ.

Анчах США делегацийĕ, Англи, Франци тата Бразили делегацийĕсемпе пĕрле, Совет Союзĕн резолюци проектне тӳрлетӳсем кĕртме сĕннĕ. Ҫав тӳрлетӳсене вĕсем СССР делегацийĕ аслă державăсем пурте килĕшсе йышăннă тăрăх тĕнчери ҫĕршывсем хушшинчи йывăрлăха пĕтерме вĕтĕмлĕ мерăсем йышăнма тăрăшнине хавшатас шутпа тăратнă.

Америка тӳрлетĕвĕсенче, пуринчен малтан, совет делегацийĕн проектĕнчен «коллективлă мерăсем тĕлĕшпе ĕҫлекен комитета» салатса ярасси ҫинчен калакан пункта кăларса пăрахма палăртнă пулнă. Пурте пĕлеҫҫĕ ĕнтĕ, ĕнерхи ларура ку пункта 11 ҫĕршыв тăратнă резолюци проектне кĕртмелли тӳрлетӳ шутласа пăхса тухнăччĕ. «Коллективлă мерăсем» тĕлĕшпе ĕҫлекен комитетăн докладне ырлас пирки панă сĕнĕве делегацисен ытларахăшĕ сирсе янăччĕ. Анчах вĕсем ку сулпа маллалла кайма хăяйман. Асăннă комитета салатса ярас тесе панă сĕнĕве сирсе янă. Ку сĕнĕве хирĕҫ делегацисенчен ытларахăшĕ сасăланă.

США делегацийĕпе ытти вырĕ делегацисем Совет Союзĕн сĕнĕвĕнчен Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта пулса пымалли ларăвне пĕр тăхтаса тăмасăр пухмалла тесе каланă вырăнтан «пĕр тăхтаса тăмасăрах» текен сăмаха кăларса пăрахма хушнă. Вĕсем тата Совет Союзĕн проектне вăхăтран вăхăта пулса пымалли ларусене тĕнчери ҫĕршывсем хушшинчи йывăрлăха сирсе яма «усăллă пулма пултарнă чухне» пухмалла тесе хушса ҫырнине кĕртме сĕннĕ. Америка тӳрлетĕвĕсенче ҫав ларура Корейăри перемири ҫинчен пыракан калаҫусене ăнăҫлă вĕҫлеме пулăшмашкăн мĕнле мерăсем йышăнасси ҫинчен пăхса тухасси ҫинчен калассине резолюцие кĕртмелле мар, тенĕ.

США делегацийĕ хăй сĕннĕ «коллективлă мерăсем» текен программа тĕлĕшпе пурăнан тĕснĕ. Кун хыҫҫăн вăл ҫак тӳрлетӳсене сасăланă чухне ҫавăншăн тавăрма ĕмĕтленнĕ. Анчах Америкăн тӳрлетӳсене йышăнассишĕн мĕнпур делегацисен ҫурри ҫеҫ сасăланă. Асăннă тӳрлетӳсене йышăнасси хирĕҫ сасăлакансем тата нихăш майлă та сасăламаннисем 17 делегацирен пуҫласа 24 делегаци таран пулнă. Ҫапла вара, ООН членĕсем пулса тăракан ҫĕршывсен представителĕсенчен ҫурри ҫеҫ, яхăн США, Англи, Франци тата Бразили тӳрлетĕвĕсене йышăнма килĕшнĕ.

Совет Союзĕ тăратнă резолюцишĕн, унта Америка тӳрлетĕвĕсене кĕртнĕ хыҫҫăн, 50 делегаци сасăланă. Ăна хирĕҫ сасăлакан пулман. Сакăр делегаци нихăш майлă та сасăламан.

СССР делегацийĕ мĕншĕн ку резолюцишĕн сасăлани ҫинчен ăнлантарса пама А. Я. Вышинский сăмах илнĕ.

А. Я. Вышинский сăмахĕ

Ҫак сăмаха калама панă пилĕк минутра эпĕ Совет Союзĕн делегацийĕ мĕнле сăлтава пула тӳрлетӳсене хирĕҫ тата резолюци проектне йышăнассишĕн сасăлани ҫинчен ăнлантарса парасшăн.

Кунта сĕннĕ тӳрлетӳсем тĕчĕшпе эпир хирĕҫ сасăларăмăр. Эпир ҫавăн пек тӳрлетӳсем ĕҫе начарлатма пултараҫҫĕ, вĕсем Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта пулса пымалли ларăвĕнче мире тĕреклетмелли тата вăрҫă хăрушлăхне сирсе ямалли, сăмахран, Корейăри вăрҫа чарса лартмалли решенисем йышăнас ĕҫе вăраха яма пултараҫҫĕ тесе шутланă, халĕ те ҫапла шутлатпăр.

Ҫакă вăл—питĕ пысăк сăлтав. Ҫак сăлтавпа асăннă тĕллевпе килĕшсе тăман тата ҫав тĕллеве хирĕҫле кирек мĕнле тӳрлетĕве те сирсе ямалла. Кун пирки урăх мĕн те пулин калани кирлех те мар.

Ҫав вăхăтрах эпир резолюци проектне пĕтĕмĕшпе йышăнасшăн сасăларăмăр. Тӳрлетӳсем кĕртнĕ хыҫҫăн вăл халĕ умсăмахран тата пĕр пунктран тăрать, унта малтанах пулнă иккĕмĕш пункт юлчĕ. Ку пункт Хăрушсăрлăх Советне хăйĕн вăхăтран вăхăта пулса пымалли ларăвне пухма сĕнет, ҫав ларура хальхи вăхăтра тĕнчери ҫĕршывсем хушшинче пулса тăнă йывăрлăха сирсе яма тата ҫĕршывсем хушшинче туслă пурăнмалли йĕрке тума мĕнле мерăсем йышăнасси ҫинчен сӳтсе явма кирли ҫинчен калать.

Эпир ҫапла шутлатпăр: тăватă держава тăратнă тӳрлетӳсем пирĕн сĕнĕве чылай начарлатрĕҫ, ҫапах та, тĕпрен илсен, тӳрлетӳсене кĕртнĕ хыҫҫăн та, ку сĕнĕве пурнăҫламалла. Паллах ĕнтĕ, Совет Союзĕ ку сĕнĕве пурнăҫа кĕртмелле пултăр тесе пур майсемпе те тăрăшĕ, ăҫта кирлĕ, унта ҫавăн пек вăхăтран вăхăта пулса пымалли ларăва мĕншĕн халех пухма кирлине ҫирĕплетсе кăтартма тăрăшĕ. Кун пек ларăва Устава палăртнă тăрăх те ҫулталăкра икĕ хутран кая мар пухмалла. Анчах пирĕн организаци ултă ҫул пурăннă вăхăтра та ҫавăн пек лару пухман-ха.

Эпир ҫакна ҫирĕплетсе кăтартма тата хамăр тытнă тĕллеве пурнăҫлама тăрăшăпăр. Пĕтĕмĕшле лару-тăрăва ҫăмăллатма—тĕнчери ҫĕршывсем хушшинчи йывăрлăха чакарма мĕнле ыйтусене йĕркелеме кирлĕ, ҫав ыйтусене йĕркелеме пĕр тăхтаса тăмасăрах мерăсем йышăнмалла, халиччен татса паман ыйтусене—халăхсем хушшинче мирлĕ пурнăҫпа хăрушсăрлăх тăвас ĕҫре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăракан ыйтусене йĕркелемелле. Эпир ҫак ĕҫсене пурнăҫламалла тăвассишĕн тăрăшăпăр.

Эпир резолюци проектне пĕтĕмĕшпе йышăнассишĕн акă тата мĕншĕн сасăларăмăр. Пирĕн резолюци проекчĕн уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ умсăмахне йышăнчĕҫ. Ҫавăнта, умсăмахра, Устав тăрăх тĕнчери мирпе хăрушсăрлăх тăвас ĕҫре тĕп ответлăха Хăрушсăрлăх Совечĕ ҫине хунине уйрăмах палăртнă. Апла пулсан, хальхи вăхăтри ытти нимĕнле органсем ҫине те ҫавăн пек ответлăх хуман. Хальхи вăхăтра Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕнче ĕҫлекен урăх нимĕнле органсен те, ҫĕнĕрен тума палăртнă органсен те,—сăмахран, ҫар ĕҫĕн исполнительнăй органне тума сĕннĕччĕ,—анчах телее пула, вĕсене тăвас ĕҫ чарăнса ларчĕ, нимĕнле органсен те, ҫавăн пек ответлăх ҫук. Асăннă умсăмахра эпир Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн питĕ паха принципне тата уп пирки никам та тавлашма пултарайман принципа ҫĕнĕрен ҫирĕплетсе кăтартни пур тесе шутлатпăр.

* *

Британи делегачĕ Ллойд хăйĕн позицийĕ тĕрĕс пулнине кăтартса пама хăтланнă. Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта, пĕр тапхăр хушши пулса пымалли ларăвне пухас шухăш вăл—лайăх шухăш, ку шухăш усăллă ĕҫсем тăвасси патне илсе пыма пултарать, тенĕ Ллойд. Анчах эпир ку ларăва пĕр тăхтаса тăмасăр пухассине хирĕҫ тăратпăр, мĕншĕн тесен халĕ ССР Союзĕпе ытти аслă державăсем хушшинчи лару-тăру питĕ йывăрланса ҫитнĕ, ҫавăнпа та халĕ ҫавăн пек ларура каласса татăлма пултарас пирки шанчăк ҫук, тенĕ вăл.

Ллойд ҫавăн пек каланине Сири делегачĕ Эль Хури питĕ хытă та тĕрĕс критиклană. Вăл ҫапла каланă: эпĕ Совет Союзĕн резолюци проектне, пĕтĕмĕшпе илсен, йышăнассишĕн сасăларăм. Анчах Бразили, Франци, Пĕрлештернĕ королевство тата США тăратнă тӳрлетӳсене сасăланă чухне эпĕ нихăш майлă та сасăламарăм. Эпĕ вара Ллойд каласа панă сăлтавсене—вăл Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта пулса пымалли ларăвне хальхи вăхăтра пухма кирлĕ мар тата ку ыйтăва татса парас ĕҫе Хăрушсăрлăх Совечĕн хăйĕн пăхса тухмалла тенине, хальхи лару-тăрура Генеральнăй Ассамблея ҫавăн пек ларăва пĕр тăхтаса тăмасăр пухма сĕнни усăллă пулмасть тенине ĕненме пултараймарăм. Эпĕ ҫапла шутлатăп: Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта пулса пымалли ларăвĕсене лару-тăру йывăрланса ҫитнĕ чухне тата пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусене сӳтсе явма пухас пулать. Хальхи вăхăтра пĕтĕм тĕнчере пулса тăнă йывăрлăх та пысăк мар тата ҫивĕчленсе ҫитмен, куншăн Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта пулса пымалли ларăвне пухма кирлĕ мар тесе шутламалла пулсан, эпĕ вара ăнланса илме пултараймастăп: ҫавăн пек ларăва пухма тата мĕнле лару-тăру пулса тăни кирлĕ-ши?

Уставра темиҫе ҫĕрте те Генеральнăй Ассамблейăн Хăрушсăрлăх Советне пĕр-пĕр ĕҫе тума сĕнме право пурри ҫинчен тата ăна полномочи пани ҫинчен каланă,—тенĕ Сири делегачĕ.—Чăннипе эпир Хăрушсăрлăх Советне ытти ыйтусем тăрăх ҫавăн пек сĕнӳсем патăмăр. Унтан та ытларах, аслă державăсенчен пĕри Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта пулса пымалли ларăвне пухма ыйтать. Унăн ыйтăвне тивĕҫтермесĕр тăма тата ҫавăн пек ларăва пухма килĕшмесĕр тăма нимĕнле сăлтав та ҫук. Ман шутпа, кунта аслă державăн ҫак ыйтăвне сирсе ярсан, ку вăл тĕрĕс мар ĕҫ пулать. Тепĕр енĕ каланă тăрăх, Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе каласса татăлмалла чухне яланах чăрмавсем кăларса тăратать иккен. Халĕ Совет Союзĕ каласса татăлма шанчăк пур тесе шутлать, лару пухма сĕнет. Мĕншĕн-ха вара ҫак ыйтăва тивĕҫтермелле мар, ҫав сĕнĕве йышăнмалла мар, мĕншĕн-ха вара тĕнчери ҫĕршывсем хушшинчи хальхи йывăрлăха чакарма вăхăтран вăхăта пулса пымалли ларăва пухмалла мар?

Шăпах та ҫак сăлтавсене пула,—тенĕ юлашкинчен Эль Хури,—эпĕ тăватă держава тăратнă тӳрлетӳсемпе килĕшместĕп.

Хăйсем мĕншĕн резолюци проекчĕшĕн сасăлани тата сасăламанни ҫинчен ытти чылай делегатсем те тухса каланă. Кун хыҫҫăн председатель Политика комитечĕн кун йĕркинчи тăваттăмĕш пункта сӳтсе явас ĕҫ вĕҫленни ҫинчен пĕлтернĕ, кун йĕркинчи тепĕр ыйтăва пăхса тухма тытăнма сĕннĕ.

Корейăри ĕҫсем

ХАЛĂХ ҪАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх ҫарĕн главнăй командованийĕ паян ҫапла пĕлтернĕ: Корея Халăх ҫарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаҫĕсемпе пĕрле Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын ман ҫарĕсене хирĕҫ халиччехи вырăнсенчех оборонăра тăрса ҫапăҫаҫҫĕ, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтереҫҫĕ.

Хĕвеланăҫĕнчипе вăтаҫĕрти фронтсенче, Чанданьрен сурҫĕртерехре, Чхолвонь районĕнче тата Мундьынри патĕнче Халăх ҫарĕн соединенийĕсем тăшман атакисене ăнăҫлă сире-сире янă, ҫав вырăнсенче тăшман вуншар танксем тата артиллери пулăшнипе атакăсем тума хăтланнă пулнă.

Ĕнер Халăх ҫарĕн зенитнăй чаҫĕсем тата самолетсене хирĕҫ ҫапăҫакан салтакĕсем тăшманăн 10 самолетне персе ӳкернĕ, унччен ҫав самолетсем, ытти самолетсемпе пĕрле, Вонсан, Хамхын, Аньбень тата Сукчхонь районĕсенче мирлĕ халăх ҫине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ пулнă.

Синьхуа агентствин корреспонденчĕ пĕлтерни

ПЕКИН, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Женьминьжибао» хаҫат паян Синьхуа агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ хыпара пичетленĕ. Унта ҫапла каланă: 1951 ҫулхи декабрĕн 8-мĕшĕнче Китай добровольцĕсен чаҫĕн зенитнăй батарейи Ҫурҫĕр Корейăри пĕр вырăнта Америкăн «Б-26» йышши бомбардировщикне персе ӳкернĕ. Самолет ҫинчи летчик парашютпа сиксе ҫĕр ҫине аннă, ăна тыткăна илнĕ. Тыткăна илнĕ Гарольд А. Стейнер ҫумĕнче хутăн икĕ енне те ӳкернĕ 5 карттă тупнă. Вĕсенчен иккĕшĕ ҫинче пĕр енне Пекин хулине, тепĕр енне Порт-Артур хулине ӳкернĕ; виҫҫĕмĕш карттăн пĕр енче — Жэхэ провинцийĕ, тепĕр енче—Мукден хули; тăваттăмĕш карттăн пĕр енче — Владивосток хули, тепĕр енче — Кэсон хули; пиллĕкмĕш карттăн пĕр енче—Нагасаки, тепĕр енче Кагосима хулисем.

Стейнер летчик ҫапла каласа панă: вăл Корейăна пынăранпа пĕтĕмпе 25 хутчен ҫĕрле вĕҫсе тухнă. Ăна Корея Халăх ҫарĕпе Китай халăх добровольцĕсен тĕп ҫул-йĕрĕсем ҫине бомбăсем пăрахма янă. Кăнтăрла вăл малтанхи хут вĕҫсе тухнă пулнă, вара самолета персе ӳкернĕ. Летчик ăҫта вĕҫсе ҫитме тата мĕн тума хушни ҫинчен пĕлместĕп тенĕ, вăл каланă тăрăх ăҫта вĕҫсе ҫитмеллине самолет штурманĕ, Америка сывлăш-ҫарĕн капитанĕ кăна пĕлнĕ. Самолета персе антарас тесе ун ҫине тупăсемпе тата пулеметсемпе пенĕ чухне ҫав капитан вилнĕ.

Пĕлтерӳн юлашки пайĕнче: Америка бомбардировщикĕ ҫинче Китай Халăх Республикин карттисем пулнă. Вăл Ҫурҫĕр Корея урлă вĕҫсе пынинчен Америка империалисчĕсем Корейăри агрессиллĕ вăрҫа тата ытларах сарма тăрăшни уҫăмлăн курăнса тăрать, тесе ҫырнă.

Демократиллĕ Германи Республикинче пурăнакансем Халăх палатин решенине ырлаҫҫĕ

БЕРЛИН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Германи Республикинче пурăнакансем премьер-министр Отто Гротеволĕн ҫĕнĕ сĕнĕвĕсене тата ҫав сĕнӳсем тăрăх Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палати Германин тĕрлĕ пайĕсене мирлĕ майпа пĕрлештерсе пĕр ҫĕршыв тăвас пирки йышăннă решение хапăл туса йышăнаҫҫĕ.

Предприятисенчи, учреждениссенчи, площадьсенчи репродукторсем патĕнче республикăри ĕҫсыннисем ĕнер Гротеволь правительство ячĕпе Халăх палатинче тунă заявление итленĕ. Премьер-министр тухса каланă хыҫҫăнах ĕҫсыннисен нумай коллективĕсем Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палатине тата правительствине телеграммăсем ярса, хăйсен правительстви Германи пĕрлĕхне тепĕр хут тăвас тĕлĕшпе пуҫарнă ҫĕнĕ ĕҫе ырлани ҫинчен пĕлтернĕ. Саксонири металлистсен профсоюзĕн правленийĕ 300 пин ĕҫсынни ячĕпе ҫырнă телеграммăра: «Пирĕн премьер-министр нимĕҫсен мĕнпур патриочĕсен шухăш-ĕмĕчĕсене палăртрĕ», тенĕ. Саксонири металлистсем «правительство йышăнакан мерăсене пурнăҫлама пулăшса, хăйсен ĕҫĕнче тата пысăкрах ҫитĕнӳсем тума сăмах параҫҫĕ.

Гротеволь правительство ячĕпе тунă заявление республикăри халăхăн пур сийĕсем те ырлаҫҫĕ.

Трумэнпа Черчилль Вашингтонра калаҫнă пирки

ВАШИНГТОН, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Пурте пĕлеҫҫĕ ĕнтĕ, Англи премьер-министрĕ Черчилль халĕ — Вашингтонра. Унта вăл Трумэнпа калаҫать. Паян ку калаҫусем пирки Шурă Ҫурт (Америка президенчĕ ĕҫлекен ҫурт) Трумэнпа Черчиллĕн заявленине пичетлесе кăларнă.

Заявленирен калаҫусем вăхăтĕнче нумай ыйтусене пăхса тухни курăнать. Анчах ҫав ĕҫсем мĕнле пулса иртни тата мĕнле ĕҫсем туни ҫинчен заявленире каласакан енĕсем «пĕр-пĕрин шухăшĕсемпе тĕллевĕсене лайăхрах ăнланса илчĕҫ» тесе ҫырнă, урăх нимĕн те каламан.

Трумэнпа Черчилль хушшинче пулнă канашлу ҫинчен ҫырнă чухне Америкăри хаҫатсемпе информаци агентствисен ирĕксĕрех калаҫусем ăнăҫлă иртменнине, пĕр ыйту тăрăх та США правительствишĕн тата Англи правительствишĕн усăллă ĕҫсем тума май килменнине йышăнма тивет.

Америка хаҫачĕсем канашлу пуҫланиччен нумай маларах ҫырнă тăрăх, Трумэн правительстви Черчилльпе калаҫнă чухне пурнăҫлама шутланă тĕп тĕллев ҫапла пулнă: США-па Англи Совет Союзĕ тĕлĕшпе, Инҫет Хĕвелтухăҫĕнче, Азире, Сывăх Хĕвелтухăҫĕпе Вăтаҫĕр Хĕвелтухăҫĕнче пĕр пек позици тытса пырасси ҫинчен каласса татăлма, «пĕрле ĕҫлемелли пĕтĕмĕшле ҫул-йĕре» хатĕрлеме шутланă. «Пĕр-пĕрин хушшинчи шанманлăха» пĕтермелле, «Европа ҫарне тăвас ыйтупа пĕр-пĕринпе каласса татăлмалла», Англин Китай Халăх Республики тĕлĕшпе тытса пыракан политикине улăштармалла, ку енĕпе Англипе Китай хушшинчи дипломати ҫыхăнăвĕсене татасси патнех ҫитмелле пулнă. Тĕп тĕллевре тата США-па Англи Иран, Египет, Сывăх Хĕвелтухăҫĕнчипе Вăтаҫĕр Хĕвелтухăҫĕнчи тата Азири ытти ҫĕршывсем тĕлĕшпе тытса пыракан политикăри хирĕҫӳсене пĕтерме палăртнă. Калаҫусем вăхăтĕнче Англипе Америка хушшинчи хирĕҫӳсем ҫивĕчленнине палăртса тăракан ыйтусене, тулашри политикăри пысăк ыйтусене йĕркелемелле пулнă.

Америкăри хаҫатсем ҫырнинчен ҫакă паллă пулнă: канашлура ҫав ыйтусем тăрăх «пĕр-пĕринпе каласса татăлса решенисем» йышăнайман.

«Нью-Йорк таймс» хаҫатăн корреспонденчĕ Рестон паян Вашингтонран пĕлтернĕ хыпарта канашлу итогне туса, ăна хак парать, канашлу пирки Вашингтонри официальнăй представительсем мĕн калани ҫинчен ҫырать. Вăл ҫапла калать: Вашингтон хулинче пурте «хальхи вăхăтра нимĕнле конкретнăй ĕҫ те тăвайман», «юлашки икĕ ҫул хушшинче Англипе Америка хушшинче тухса тăнă йывăрлăхсемпе хирĕҫӳсене икĕ пуҫлăх пĕтереймен...» тесе шутлаҫҫĕ.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаҫатăн корреспонденчĕ Рассел хăй Вашингтонран пĕлтернĕ хыпарта калаҫусем вăхăтĕнче хăшпĕр ыйтусем тăрăх кăна решени йышăннине палăртать, официальнăй ҫынсем ҫапла шутлаҫҫĕ, тет.

«Черчилль нимрен ытларах Вашингтона Трумэн президентăн шухăшĕсемпе тата политикипе паллашма килнĕ, вăл хăйсен политикăллă ыйтусенчи пĕр-пĕрне хирĕҫле шухăшĕсене тĕпренех улăштарас пирки каласса татăлма килмен», тесе ҫырать вăл.

«Нью-Йорк таймс» хаҫатăн корреспонденчĕ уйрăм ыйтусенче Англипе Америка хушшинче хирĕҫӳсем пурри канашлура та палăрни ҫинчен, вĕсем малашне тата ытларах ҫивĕчленме пултарасси ҫинчен ҫырать. Унтан вăл хальхи канашлура «Англин экономикăпа укҫа-тенкĕ тĕлĕшĕнчи йывăрлăхĕсем ҫинчен сăмах хускатман, ҫав йывăрлăхсем икĕ ҫĕршыв (Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англи. — **Ред.**) хушшинчи лару-тăрăва юлашки темиҫе ҫул хушшинче урăх йышши факторсенчен ытларах йывăрлатрĕҫ», тет.

Ответлă редактор заместителĕ
И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР.

Египет халăхĕ Совет морякĕсене хĕрӳллĕ саламлать

КАИР, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн пулă тытмалли карапĕсем Порт Саида пыни, ҫав карапсем ҫинчи совет морякĕсене хула халăхĕ ăшă кăмăлпа йышăнса илни ҫинчен Египетри хаҫатсем нумай ҫыраҫҫĕ.

«Вафд» партин органĕ—Каҫхине тухакан «Аль-Балаг» хаҫат ҫапла ҫырать: Порт-Саидра пурăнакансем совет морякĕсене саламлама пухăнса пысăк демонстраци ирттернĕ. Демонстрантсем ирех гаване кайнă, вĕсем ҫĕрлеччеех портра пулнă. Хаҫат малалла ҫакна палăртать: акăлчансем портра ĕҫлекен пĕр рабочие вĕлернине хирĕҫ протестлесе портра ĕҫлекен рабочисем иккĕмĕш кун ĕнтĕ забастовка тăваҫҫĕ. Вĕсем совет ҫыннисене кăмăлланине палăртса, Совет Союзĕн пулă тытмалли карапĕсене гаване илсе пырса тăратма пулăшнă. Юлашкинчен хаҫат: хула халăхĕ совет морякĕсене ăшă кăмăлпа кĕтсе илнинчен тата хавассăн йышăннинчен Египет халăхĕ Совет Союзне кăмăллани курăнать, тесе ҫырать.

«Аль-Ахрам» хаҫат Порт-Саидри халăх Совет Союзĕн пулă тытмалли карапĕсен капитанĕсене: «Сывă пултăр Россия!», «Сывă пултăр совет халăхĕпе Египет халăхĕ хушшинчи туслăх!», тесе саламлани ҫинчен пĕлтерет.

Ливан халăхĕ ют ҫĕршывсен компанийĕсене национализацилессишĕн тăрать

БЕЙРУТ, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Аль-Халаф» хаҫат пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 7-мĕшĕнче Бейрутра, электричество компанийĕн ҫурчĕ умĕнче, ĕҫсыннисен демонстрацийĕ пулнă. Демонстрацие пухăннисем ют ҫĕршывсен Ливанри компанийĕсене: Бейрутри электричество компанине, «Режи де Таба», «Сирипе Ливан банкĕ» (французсен банкĕ) текен компанисене, Бейрут портĕнчи компание, «Ирак Петролеум компани», «Трансарабиен пайплайн компани» текенскерсене тата ыттисене те национализацилеме требовани лартнă.

Демонстрацие пухăннисем Англипе Америкăн «Вăтаҫĕр Хĕвелтухăҫĕнчи командовани» текенскерне тумалли агрессиллĕ планĕсене хирĕҫ, «Трумэн программи» текенскерĕн 4-мĕш пункчĕ тăрăх Америка «пулăшу парассине» хирĕҫ, ҫĕнĕ вăрҫă пуҫарма хĕтĕртекенсене хирĕҫ протестленĕ.

МОДЕНĂРИ ĔҪСЫННИСЕМ ИРĔКЛĔХШĔН ВИЛНĔ ҪЫНСЕНЕ ХИСЕПЛЕСЕ АСĂНАҪҪĔ

РИМ, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Фондерие риуните» заводри рабочисене полици забастовка хутшăннăшăн персе вĕлернĕренпе икĕ ҫул тултарнă. Январĕн 9-мĕшĕнче Моденăри ĕҫсыннисем полици рабочисене персе пăрахнăранпа икĕ ҫул тултарнине палăртнă.

Моденăра рабочисене персе вĕлернĕренпе икĕ ҫул тултарнă ятпа митингсемпе демонстрацисем ирттерме полици чарнă пулин те, Моденăри ĕҫсыннисем вилнĕ паттăрсене асăнса демонстраци ирттернĕ, митинга пухăннă. Митингра металлурги промышленноҫĕнчи рабочисемпе служащисен федерацийĕн генеральнăй секретарĕ Ровела сенатор сăмах тухса каланă.

Моденăри полици демонстрацисемпе митингсем ирттерме чарнине хирĕҫ протестлес ятпа мĕнпур рабочисем икĕ сехет хушши забастовка тунă.

Бомбей портĕнчи рабочисемпе служащисем забастовка тума йышăннă

БОМБЕЙ, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Бомбей портĕнчи рабочисемпе служащисем апат-ҫимĕҫпе япаласем хакланнине тата реальнăй ĕҫ укҫи чакнине хирĕҫ протестлес ятпа январĕн 15-мĕшĕнчен забастовка тума йышăннă.

Забастовкăна портсенче ĕҫлекен профсоюзсен мĕнпур членĕсем—пĕтĕмпе 20 пин ҫын хутшăнĕ, тесе шутлаҫҫĕ.

Шупашкарти тата республикăри кинотеатрсенче

„ОПАСНЫЙ РЕЙС“

ятлă ҫĕнĕ илемлĕ фильм кăтартма пуҫлаҫҫĕ.

Сценарийĕ Е. Фидлерăн. Сценарие Л. Турекăн «Последняя вербовка» ятлă романĕ тăрăх ҫырнă. Композитор—Г. Зибер.

Фильма нимĕҫсен «ДЕФА» киностудийĕ ӳкерне. 1951 ҫул.

Экрансем ҫине Главкинопрокатăн Чăваш республикинчи контурĕ кăларать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ 3-99, ответлă секретарь—4-26 секретариат—3-54 промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăҫ пайĕ—4-17, ялхуҫалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, ҫырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01209 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.